Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин
Патшалăх Канашне янă Çыру

Хисеплĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, паянхи пухăва килнĕ хăнасем, хаклă Чăваш Ен çыннисем!

Эпир паян сирĕнпе çитес вăхăтри малашлăхра Конституципе çирĕплетнĕ тăрăх мĕнле ĕçсем туса пырасси пирки калаçăпăр, вĕсене палăртса хурăпăр тата мĕнле ĕçсем туса пурнăçа кĕртсе пырассине çирĕплетсе хăварăпăр.

2021 çул Чăваш Ен халăхĕн ĕç паттăрлăхĕн паллипе иртрĕ. Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тунăрапа 80 çул çитнĕ çулталăкра эпир хамăра вăрçă вăхăтĕнчи хаяр кунсен юхăмне лекнĕнех туйса илтĕмĕр. Пирĕн асаттесемпе аттемĕрсен, асаннесемпе аннемĕрсен ĕçри тата çапăçури хăюлăхĕпе паттăрлăхĕн истори страницисенче асăнмасăр юлнă пулăмсене тĕплĕн тĕпчесе палăртас ĕçе историксемпе пĕрле ача сачĕсенчи пепкесемпе шкул ачисем, студентсем, ялсемпе хуласенче тата поселоксенче пурăнакан ентешсем хастарлăн хутшăнса хăйсен пархатарлă тӳпине хывреç. Республикăра ăслăлăх конференцийĕсем, уçă уроксем, музей куравĕсем, акцисем, фестивальсемпе конкурссем йĕркелесе ирттернĕ. Документаллă тата илемлĕ фильмсем ӳкернĕ, литературăпа музыка произведенийĕсем çырнă, кĕнекесем пичетлесе кăларнă, пĕрлехи информаци порталне туса хатĕрленĕ.

Çапла вара, Чăваш Республики пирĕн Тăван çĕршыв территорийĕнче хӳтĕлев чиккисене тунă çынсен тĕслĕхĕпе ĕç паттăрлăхĕн геройĕсене ĕмĕрлĕхех асра тытса пурăнассине тытăмлăн татса панă Раççейри пĕрремĕш регион пулса тăчĕ.

Республикăра асăну кунне çирĕплетнĕ: Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тăвакансен Асăну кунĕ – юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ.

Паллах ĕнтĕ, тылри ик çĕр пин ытла çыннăн чăн-чăн массăллă паттăрлăхĕ – Çĕнтерӳ кунне çывхартас ĕçе хывнă калама та çук пысăк тӳпе. Тыл ĕçченĕсем эвакуациленĕ заводсене çĕнĕ вырăнта çийĕнчех хута янине, уй-хирте, эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ госпитальсенче ырми-канми вăй хурса ĕçленин пĕлтерĕшне палăртмалла. Пирĕн тылри ĕç паттăрлăхĕпе çыхăннă темăна Тăван çĕршыва чунпа парăннин, çитĕнекен ăрăва çарпа патриотлăх тата ăсхакăлпа кăмăл-сипет тĕлĕшпе воспитани памалли ырă тĕслĕх вырăнне хурса халăх хушшинче анлăн сарас ĕçе малалла тăсмалла.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Владимирович Путин Шупашкар хулине ĕç паттăрлăхĕн хулин статусне парасси çинчен тунă йышăну аслă ăрури йăхташăмăрсен Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенчи ĕç паттăрлăхĕпе хăйсене шеллеменлĕхне тивĕçлипе çирĕплетни пулса тăчĕ.

Тылри ĕç паттăрлăхĕн темине анлăн сарас ĕçе шкул музейĕсене аталантарса, архив материалĕсене тĕпчемелли наука центрне туса хурса, çавăн пекех Наци музейĕнче те, республикăри районсенче те ялан ĕçлекен экспозицисем йĕркелесе малалла тăсмалла.

Асăннă çул-йĕр тĕлĕшпе тăвакан ĕçре шырав отрячĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине шута илсе шырав юхăмне хутшăнакансене пурне те тав тăватăп. Шырав отрячĕсемпе пĕрлешĕвĕсене пулăшма уйăрса паракан грантсен виçине çĕнĕрен палăртмалла тесе шутлатăп. Чăваш Ен Вĕренӳ министерствине тивĕçлĕ сĕнӳсем туса хатĕрлеме хушатăп.

Куславкка районĕнче çĕкленекен «Хӳтĕлев чиккисене тунисене пуç тайса» асăну комплексĕ, унти ĕçсене кăçал çулла вĕçлеме палăртнă, çав тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсен тулли пĕтĕмлетĕвĕ, хальхи вăхăта хаяр вăрçă çулĕсен синкерлĕ кунĕсемпе çыхăнтаракан паллă та сумлă вырăн пулса тăрĕ.

Асăннă ĕç Раççейри çарпа истори обществипе тата «Культура» наци проекчĕн «Пултаруллă çынсем» проектне пурнăçлас енĕпе ĕçлекен комиссипе тачă çыхăнса пурнăçланать.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Эпир сирĕнпе вăрçă ачисем çинчен калакан саккуна йышăнтăмăр тата ăна пулăшу памалли конкретлă майсемпе тултарса пыма калаçса татăлтăмăр, палăртнине халĕ йĕркеллĕн пурнăçласа пыратпăр.

Тыл ĕçченĕсем тĕлĕшпе йĕркеленнĕ тĕрĕсмарлăха тӳрлетни вырăнлă пулассăн туйăнать. Йăлана кĕнĕ тăрăх, ĕç ветеранĕсене, вĕсем, паллах, хисепе тивĕçлĕ çынсем шутланаççĕ, уйăхсерен паракан тӳлевсем тыл ĕçченĕсене уйăракан тӳлевсенчен пысăкрах. Çав тӳлевсене сахалтан та пĕр тан тумалла тесе шутлатăп. Чăваш Ен Ĕçлев министерствине Чăваш Ен Финанс министерствипе пĕрле тивĕçлĕ йышăнусем тума ыйтатăп.

2022 çула Чăваш Енĕн паллă çыннисен çулталăкĕ тесе пĕлтернĕ. Çапла майпа эпир сирĕнпе хамăрăн ентешĕмĕрсемпе, маларах ĕçлесе чапа тухнисемпе те, халь пурăнаканнисемпе те, мăнаçланассине малалла тăсатпăр.

Пирĕн ентешсем, Чăваш Енĕн паллă çыннисем – ыттисемшĕн паха тĕслĕх! Вĕсен ĕçĕсемпе çитĕнĕвĕсем вара – хăвăн тĕллевне лайăх пĕлсе тăрсан тата суйласа илнĕ çулпа чăрмавсене çĕнтерсе малалла çирĕппĕн утсан пурне те тума пултарнине уççăн кăтартса пани.

Çавна май палăртса хунă мероприятисене пурнăçланă çĕре, çĕнĕ проектсем пуçарас ĕçе республикăри ĕç тăвакан тата саккун кăларакан влаç органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем кăна мар, хальхи гражданла обществăн мĕнпур институчĕ, республикăра пурăнакан уйрăм çынсемпе ытти регионсенчи ентешĕмĕрсем те хастарлăн хутшăнасса шанатăп.

Паллă ентешсене халалласа ирттерме палăртса хунă тĕп мероприятисенчен пĕри Ентешсен форумĕ шутланать. Тĕрлĕ сферăра курăмлă çитĕнӳсем тунă, тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан ентешĕмĕрсем пĕр вырăна пуçтарăнĕç. Форум Республика кунне те илем кӳрĕ, тăван енĕн тĕп пуянлăхне те уççăн кăтартса парĕ.

Сӑмах май, пирӗн классик тата ҫӗнӗ чӑваш поэзийӗн никӗслевҫи Ҫеҫпӗл Мишши хӑйӗн «Ҫӗн Кун аки» сӑввинче тӑван халӑх пуласлӑхне, пирӗн Андриян Николаев уҫлӑха вӗҫессине пӗлнӗ пекех палӑртса хӑварнӑ:

«… Хӑватлӑ ҫӗн чӗреллӗ ҫӗн ӗмӗр чӑвашӗ,
Хулпуҫҫипе кӑвак пӗлӗте перӗнсе,
Кун-ҫул уйне тухса хӗвел тумтир тумланӗ,
Ҫӗн кун ӑна ыталӗ савӑнса, ачашшӑн;
Умне, ҫӗн ҫул ҫине, ҫӗн чечексем чӗртсе,
Интернационал кӗперӗ анӗ…»

А.Г. Николаев ячӗллӗ музей-мемориал комплексӗн проектпа смета докуменчӗсене ҫӗнетме пӗлтӗрех укҫа-тенкӗ уйӑрнӑччӗ. Анчах та ку енӗпе ӗҫсем япӑх пыраҫҫӗ. Чӑваш Ен Культура министерствин пӗтӗм ыйтӑва кӗске вӑхӑтра татса памалла тата Чӑваш Ен Строительство министерствипе пӗрле объекта укҫа-тенкӗпе тивӗҫтермелли программӑна кӗртмелли проект ӗҫӗсене пуҫарса ямалла.

Эпир республика территорийӗнче пурӑнакан мӗнпур халӑхӑн пуян культура еткерӗпе тата йӑли-йӗркипе мухтанатпӑр. «Чӑваш чӗлхине сыхласа хӑварасси, вӗренесси тата аталантарасси» программӑна пурнӑҫлас тӗлӗшпе иккӗмӗш ҫул ӗҫлетпӗр ӗнтӗ. Пирӗн республика территорийӗнче пурӑнакан мӗнпур халӑха хӑйӗн культурипе йӑли-йӗркине тата тӑван чӗлхине тивӗҫлипе сыхласа упрама майсем туса памалла. Ҫӗршыв Президенчӗ Раҫҫейри Халӑхсен культура еткерӗн ҫулталӑкӗ тесе пӗлтернӗ ҫулта ҫакӑн ҫинчен тепӗр хут аса илни кӑна мар, асӑннӑ сферӑри ӗҫсене тытӑмлӑн йӗркелесе яни пӗлтерӗшлӗ.

Эпир ҫӳлерех асӑннӑ программа шайӗнче тума пуҫланӑ ӗҫ лайӑх никӗс хывса хӑварчӗ. Сӑмахран, Наци тӗррин шкулӗ ӗҫлесе кайрӗ, унта республикӑри ватӑсем те, кӗҫӗн ҫултисем те вӗренеҫҫӗ. Тӗрӗ кунне уявланӑ шайра тӗрӗ ӑстисем икӗ ҫул хушшинче ҫакӑн пек шедеврсем туса хатӗрлерӗҫ: 2020 ҫулта – Сурпан ПӖРЛЕ, 2021 ҫулта – Чӑваш Енӗн тӗрленӗ картти. Вӑл пире Раҫҫейӗн тӗрленӗ карттине тума хавхалантарчӗ. Пире Федераци Правительствинчи ӗҫтешсем пулӑшрӗҫ, эпир вара асӑннӑ проекта Раҫҫейри мӗнпур регион хутшӑнассине тивӗҫтертӗмӗр.

«Раҫҫейӗн тӗрленӗ картти» вӑл – туслӑн тата килӗштерсе пурӑнма чӗнекен йыхрав, Тӑван ҫӗршыва юратнине, вӑхӑтпа кун-ҫулӑн, территорисемпе пулӑмсен, Раҫҫей халӑхӗсен хальхи пурнӑҫӗпе аваллӑхӗн ҫыхӑнӑвне ытарлӑн палӑртмалли май. Чӑваш Ен Культура министерствине ку тӗлӗшпе палӑртса хунӑ ӗҫсене йӗркеллӗн тата вӑхӑтра пурнӑҫлассине тивӗҫтерме ыйтатӑп.

Хулашӑн та, ялшӑн та пӗрешкел культура хутлӑхӗн хальхи инфратытӑмӗ обществӑна ҫирӗппӗн те килӗшӳллӗн аталантармалли никӗс пулса тӑнине эпир пурте лайӑх ӑнланатпӑр. Ҫакӑн валли республика Правительстви иртнӗ ҫулсемпе танлаштарсан питех те пысӑк бюджет инвестицийӗсем уйӑрать. Чӑваш Ен Культура министерстви асӑрхаса тӑракан отрасльсене уйӑракан укҫа-тенкӗ калӑпӑшӗ Чӑваш Республикин пӗрлештернӗ бюджетӗнче тӑ-

ватă çул хушшинче икĕ хут ӳснĕ тата 2020 çулта 3,8 миллиард тенкĕпе танлашнă, 2021 çулта – 4,4 миллиард тенкĕпе.

Паян эпĕ сирĕн умăрта Чăваш патшалăх филармонийĕн çĕнетнĕ çурчĕн сцени çинчен калаçатăп. Пĕлтĕр эпир йĕркелӳ ыйтăвĕсемпе укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчи пысăк чăрмавсене сирсе кунти 2008 çултанпа тăсăлакан юсавпа çĕнетӳ ĕçĕсене вĕçлерĕмĕр. Малта – курăмлă темиçе проекта пурнăçласси. Вĕсен шутĕнче – Чăваш патшалăх оперăпа балет театрне юсаса çĕнетесси. Хальхи вăхăтра «Дом.РФ» Фондпа килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă, çавна май Чăваш Ен Культура министерстви умĕнче Чăваш Ен Строительство министерствипе пĕрле çак проекта 2025 çулччен пурнăçлас тĕллев тăрать. Унсăр пуçне, кăçалтан тытăнса эпир çулсерен ялти пиллĕкрен кая мар çĕнĕ культура çурчĕ тумалли пилĕк çуллăх строительстви хута кайни тата 10-ран кая мар клуба тĕпрен юсасси, модуль мелĕпе тăвакан клуб йышши культура учрежденийĕсем тăвасси çинчен пĕлтеретпĕр. Çак çул-йĕр валли бюджет çинчен калакан саккунра 318 миллион тенкĕ уйăрса хăварнă.

Чăваш Ен Президентăн «Пушкин картти» анлă проектне пурнăçланă çĕре хутшăнакан çĕршыври чи лайăх çичĕ регион йышне хастарлăн кĕрсе ку енĕпе ĕçе пуçăнчĕ те ĕнтĕ, асăннă проект ачасемпе çамрăксене республикăри культура учрежденийĕсене тӳлевсĕр çӳреме май парать. Паллах, «Пушкин карттине» кăçал та хастарлăн пурнăçламалла. Кунта çĕнĕ произведенисем хайлани тата  постановкăсем лартни те ырă витĕм кӳме пултарать. Асăннă тĕллеве пурнăçлассине пулăшма культура учрежденийĕсене уйăрса паракан грантсен шутне те, вĕсен виçисене те пысăклатнă.

Культурăпа истори хаклăхĕсем çинче никĕсленсе тăракан вĕренӳ – вĕрентӳ – воспитани ĕçĕ лайăх аталаннă, сывă тата социаллă яваплăхлă çынна пăхса ӳстермелли шанчăклă никĕс шутланать.

Республикăра тăван чăваш чĕлхине вĕрентме пуçламăш классем валли вĕренӳ кĕнекисем пичетлесе кăларнă. Вĕренӳ министерствин çак ĕçе малалла тăсмалла,  вĕрентӳ ĕç-хĕлĕ валли кăларакан вĕренӳ кĕнекисен переченьне пуянлатса пымалла.

Çав хушăрах асăннă ыйту тĕлĕшĕнчи тĕп тĕллев пирĕншĕн кашни ачана, вăл ăçта пурăннине, нацине тата мĕнле тĕне ĕненнине пăхмасăр, хăйĕн тăван чĕлхине, тăван ен историйĕпе культурине вĕренмелли пĕр тан майсем туса хурасси пулса тăрать.

Пире пулăшса, федераци центрĕ шкул вĕренĕвĕнче 2022 çулта федераци патшалăх çĕнетнĕ вĕренӳ стандарчĕсене ĕçе кĕртме тĕллев палăртнă, вĕсен тĕп тивĕçĕ – тĕнчере конкурентлă пулма пултаракан, çĕршыва тата тăван çĕре чунтан юратакан çынна пăхса çитĕнтерме витĕм кӳресси. Паллă ентешĕмĕрсене халалласа ирттерекен мероприятисем çав тивĕçе пурнăçлама пулăшмалли хушма майсем пулса тăрĕç тесе шутлатăп.

Пĕлтĕр эпир пилĕк шкул тума пуçламалли тĕллеве палăртнăччĕ. Пирĕн плансем хута каякан федераци программисем тата вĕсене пурнăçламалли майсем çинче никĕсленсе тăратчĕç. Анчах та сăмаха калама кăна çăмăл, ĕçе пуçăннă чухне вара тĕрлĕ чăрмав сиксе тухать. Пĕрремĕшĕнчен, программăна

хута ямалли уҫӑмлӑ тата тӗп виҫесене ҫирӗплетесси вӑраха кайрӗ. Иккӗмӗшӗнчен, ҫӗр лаптӑкӗсене тивӗҫлӗн хатӗрлесе тата йӗркелесе ҫитерес, проектпа смета докуменчӗсене туса хатӗрлесе ҫирӗплетес енӗпе хӑйсем ҫине илнӗ тивӗҫсене муниципалитетсем те, ҫурт лартакансем те кирлӗ шайра пурнӑҫламанни япӑх витӗм кӳчӗ. Пӗлтӗр йӑнӑшсене тӳрлетсе пысӑк ӗҫ туса ирттертӗмӗр.

Ҫапла вара, Шупашкар хулин «Университет» микрорайонӗнче 2023–2024 ҫулсенче тума палӑртакан шкул валли эпир укҫа-тенкӗ уйӑрса пама ыйтнине ҫирӗплетрӗҫ. Асӑннӑ шкула кӑҫалах тума пуҫласа тепӗр ҫул вӗҫлемелли майсене пӑхса тухни ырӑнлӑ пулать тесе шутлатӑп. Чӑваш Ен Строительство министерствине Чӑваш Ен Вӗренӳ тата Финанс министерствисемпе пӗрле ҫак ыйтӑва тӗплӗн тишкерсе тухма ыйтатӑп.

Ял территорийӗсене комплекслӑн аталантармалли программа шайӗнче Сӗнтӗрвӑрринче тепӗр ҫул туса пӗтерме палӑртса шкула тума пуҫламалла.

«ВЭБ.РФ» Патшалӑх аталану корпорацине хутшӑнтарса 1300 ҫӗнӗ шкул тумалли Владимир Владимирович Путин Президент хушӑвӗпе ҫирӗплетнӗ программа республикӑна 7 шкул тума майсем йӗркелет. Вӗсем Шупашкар хулинчи «Акварель», «Радужнӑй», «Солнечнӑй», «Ҫӗнӗ хула» микрорайонсенче, 14 микрорайонта, ҫавӑн пекех Кӳкеҫре тата Ҫӗнӗ Шупашкар хулисенче тума палӑртакан шкулсем. Паллах, ҫакӑ эпир сирӗнпе мӗнлерех вӑр-вар ӗҫлеме пултарнинчен килет.

Чӑваш Ен кивелнин шайӗ 50 процентран та иртекен шкулсемпе ача сачӗсене тӗпрен юсамалли анлӑ программӑна ҫӗршыври регионсен хушшинче пӗрремӗш пулса хута ячӗ. Пӗтӗмпе 53 шкула, 35 ача садне тата ачасен сывлӑхне ҫирӗплетмелли 3 лагере ҫӗнетнӗ. Ҫакна тума икӗ миллиард ытла тенкӗ янӑ. Асӑннӑ ӗҫӗн тӗп тӗллевӗ – вӗренӳ ӗҫ-хӗлне йӗркелемелли, ачана пултарулӑх тата спорт енӗпе аталантармалли тулли экотытӑм туса хурасси.

Раҫҫей Президенчӗн хушӑвӗпе килӗшӳллӗн кӑҫал ҫакӑн пек программа пӗтӗм ҫӗршывӗпех ӗҫе кӗрет. Чӑваш Республики 2022–2023 ҫулсем валли панӑ заявкӑра – 31 шкул. Ҫак тӗллевсем валли пире федераци бюджетӗнчен 2,3 миллиард тенкӗ уйӑрнӑ.

Чӑваш Ен Вӗренӳ министерствине тӗп юсав туса ирттермелли тата 78 шкула 2024–2025 ҫулсенчи объектсен переченьне кӗртес ыйтӑва ырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе пӗрле хастарлӑн та кал-кал ӗҫлесе татса пама хушатӑп.

Унсӑр пуҫне, тӗп юсав программине кӗмен кивелсе ҫитнӗ шкулсене те куҫ умӗнче тытмалла. Вӗсем Ҫӗрпӳ районӗнчи Чурачӑк, Канаш районӗнчи Янкӑлч салисенчи, Вӑрмар районӗнчи Арапуҫ ялӗнчи, Улатӑр районӗнчи Стемас тата Чуварлей салисенчи шкулсем.

Пирӗн тӗллев – асӑннӑ шкулсенче пахалӑхлӑ пӗлӳ тата воспитани парассине тивӗҫтерме вӑя хурса ӗҫлесси. Федераци майӗсемпе тата мелӗсемпе, ҫавӑн пекех республикӑри тата муниципалитетсенчи хамӑрӑн шалти майсемпе усӑ курса ҫитес виҫӗ ҫулта вӗсене тӑвас ӗҫе пуҫӑнмалла.

Вĕренӳ ĕç-хĕлĕн юхăмĕнче пирĕн ачасен пултарулăхĕпе кăмăл-туртăмне мĕн пĕчĕкренех асăрхама, çавăн пекех уйрăмах пултаруллă ачасене тупса палăртма пулăшакан çул-йĕре тĕп вырăна хумалла. Шкул тытăмĕпе професси пĕлĕвĕ паракан тытăмăн ĕçне вара регион экономикине кирлĕ кадрсемпе тивĕçтермелли, ачасене хăйсен пултарулăхĕпе туллин усă курма пултармалли перспективăсене тĕплĕн уçса памалли майпа йĕркелемелле. Çак тĕлĕшпе аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсемпе професси вĕренĕвĕн учрежденийĕсем, предприятисемпе шкулсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлени вырăнлă пулмалла. Чăваш Ен Вĕренӳ министерствин кăçал вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле шкултан тытăнсах «пĕрремĕш» ĕç профессине алла илме майсем туса парассипе çыхăннă пысăк калăпăшлă «ВПК 21 – Вĕренӳпе производство класĕсем» профориентаци проектне пурнăça кĕртмелле. Проекта хальлĕхе Шупашкарти профильлĕ классен сечĕллĕ шкулсенче çак çул-йĕрсемпе пурнăçлаççĕ: «Педагогика», «Медицина», «Ял хуçалăхĕ», «Машиностроени», «Электроэнергетика» тата «IT». Кунта географи чиккисене анлăлатни, кашни муниципалитет пĕрлĕхне явăçтарни пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш Ен Вĕренӳ министерствине çак ĕçе, федерацин «Профессионалитет» пысăк калăпăшлă проекчĕ 2022 çулта хута кайнине шута илсе, малалла тăсма, çавăн пекех шкултан вĕренсе тухакансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă аслă вĕренӳ заведенийĕсенче тата вăтам професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенче маллалла вĕренме явăçтармалли мероприятисен комплексне туса хатĕрлеме тата пурнăça кĕртме хушатăп.

Совет Союзĕн Геройĕ А.В. Кочетов ячĕллĕ пирĕн Чăваш кадет корпусĕ 2018 çултанпа ăнăçлă аталанать тата республикăри кадет юхăмĕн ырă тĕслĕхĕ пулса тăрать. Кадет корпусĕн ят-сумне çĕклес тата ытти çавнашкал учрежденисен стандарчĕсене тивĕçтермелле тăвас тĕллевпе эпир иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа пĕтĕм кадета тӳлевсĕр вĕри апатпа тата тумтирпе тивĕçтертĕмĕр. Пирĕн патриотла воспитани парас ĕçе малалла тăсмалла.

Патриотла воспитани ĕçĕнчи компетенцисен центрĕ тата çав ĕçе йĕркелесе тăракан сыпăк «АВАНГАРД» Центр пулса тăмалла, вăл Çĕрпӳ районĕнчи «Звезднăй» лагерь никĕсĕ çинче çулталăкĕпех ĕçлемелли майпа кăçалах уçăлĕ. Унта опытлă специалистсем ертсе пынипе Раççей Оборона министерствин методика сĕнĕвĕсене тĕпе хурса пилĕк кунлăх сборсем ирттерĕç.

Çавăн пекех республикăри ачасен сывлăхне çирĕплетмелли организацисен инфратытăмне çĕнетсе ачасен пултарулăхне аталантармалли центрсем тăвас ĕçе малалла тăсмалла тесе шутлатăп. Тĕслĕхрен, «Вăрманти юмах» – санаторипе курорт сиплевĕн, «Шурă чулсем» – вĕренӳпе пултарулăх центрĕ тата спорт туризмĕн центрĕ, «Росинка» – физкультурăпа спорт çул-йĕрĕ енĕпе ĕçлекен центр пулма пултараççĕ. Вĕсен ĕç-хĕлне пĕрлехи идеологипе тивĕçтерсе пĕр пĕтĕм йĕркелесе тăракан орган урлă туса пымалла-тăр. Чăваш Ен Вĕренӳ, Спорт тата Сывлăха сыхлас ĕç министерствисене çак ыйтăва тĕплĕн тишкерсе сĕнӳсем пама ыйтатăп.

Вĕренӳ пахалăхĕ çине витĕм кӳрекен тĕп сăлтавсенчен пĕри вĕренӳ организацийĕсене пысăк ăсталăхлă педагогика кадрĕсемпе çителĕклĕ шайра

тивĕçтерни тата вĕрентекенсене тивĕçлĕн хавхалантарса тăни пулнине эпир лайăх ăнланатпăр. Чăваш Ен Вĕренӳ министерствине вĕренӳ организацийĕсенче наставник ĕçне тата ăслăлăхпа тĕпчев ĕç-хĕлне пурнăçлакан, малта пыракан педагогика технологийĕсене саракан, ĕçтешĕсене методика пулăшăвĕ паракан вĕрентекенсем валли хавхалантармалли тӳлевсем уйăрса пама палăртса отрасльти ĕç тӳлевĕн тытăмне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан сĕнӳсем тăратма сĕнетĕп.

Правительство ĕçĕнче çамрăксен политики тĕлĕшĕпе хастарлăха палăрмаллах ӳстермелле. Çав хушăрах Чăваш Ен яш-кĕрĕмĕ хастар пулнине палăртмалла.

Иртнĕ çулхи пĕтĕмлетӳсем тăрăх Чăваш Республики Раççей çамрăкĕсен гранчĕсене çĕнсе илнĕ хисеп тăрăх ТОП-5 шутне кĕчĕ. DOBRO.RU пĕрлехи информаци тытăмĕнче шута илнĕ волонтерсен хисепĕпе эпир ТОП-10 шутне кĕретпĕр. Волонтер юхăмĕнче паян – 65 пин ытла çын. Мĕнпур ырă тăвакана тав тăватăп. Паянхи кун вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ питех те пĕлтерĕшлĕ. Волонтерсем пирĕн тухтăрсене, ватăсене, пулăшу кĕтекен мĕнпур çынна пулăшма чăн малтан килчĕç.

Пуласлăх, паллах, паянхи çамрăксенче. Çавăнпа та вĕсене ĕç-хĕлĕн пĕтĕм сферине тата пысăк пĕлтерĕшлĕ йышăнусем туса хатĕрленĕ çĕре явăçтарассине тивĕçтермелле, унпа пĕрлех çамрăксене тĕрлĕ енлĕн аталантармалли тата пултаруллă та тухăçлă ĕçлемелли майсем туса пани те пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш Енре «Çамрăксен çурчĕсем», «Çамрăксене аталантармалли центр» евĕр вырăн туса хумалла тесе шутлатăп, вĕсем çамрăксен политики енĕпе пурнăçламалли тĕп çул-йĕрсене пĕр лаптăкра пĕрлештерме май паракан, çамрăксен проектпа пултарулăх ĕçĕ-хĕлĕн компетенцийĕн центрне йĕркелеме, çавăн пекех çамрăксене кирлĕ тĕрлĕ мероприяти ирттермелли вырăн пулса тăрĕç. Чăваш Ен Вĕренӳ министерствине ку ыйтăва Шупашкар хулин администрацийĕпе пĕрле пăхса тухма ыйтатăп.

Пĕлтĕр эпир çамрăксемпе студентсем валли пултарулăхри ăнтăлушăн палăртнă республика Пуçлăхĕн стипендийĕсене тивĕçмелли ӳсĕм çулне 35 çула çити ӳстертĕмĕр. Стипенди виçине 2009 çултан пуçласа индексацилеменнине шута илсе, ăна 2 500 тенкĕ таран пысăклатнине тĕрĕс тесе шухăшлатăп.

2021 çулта Раççейре паллă пулăм пулса иртрĕ: Раççейри «Пĕлӳ» обществине малта пыракан вĕренӳ хутлăхне йĕркелес тĕллевпе çĕнĕрен хускатса ячĕç. Кăçал, Паллă ентешсен çулталăкне уявланă шайра, Раççейри «Пĕлӳ» обществин Чăваш Республикинчи филиалĕпе пĕрле регионти Пĕлӳ марафонне ирттерессине палăртса хума сĕнетĕп. Вăл пулăшнипе пирĕн çамрăксен малашнехи аталану çул-йĕрне суйласа илме пулăшакан хăйсен пĕлĕвĕсене ку чухнехи платформа çинче ӳстерме май пулать. Лекцисенчен пĕрне хамăрăн ентеше, тĕнчипе паллă карап ăстине Алексей Николаевич Крылов академике халаллама сĕнетĕп.

Хальхи Чăваш Енĕн тĕп инкекĕсенчен пĕри çамрăксенчен те пăрăнса иртмест. Республика ытти регионсене ĕçлеме каякан ĕçпе тивĕçтернĕ çынсен тӳпи енĕпе çĕршывра, шел пулин те, тăваттăмĕш вырăнта тăрать.

Çавăнпа Правительствăн тĕп тĕллевĕсен шутĕнче – çынна аталанма тата ăна хăйĕн пултарулăхне туллин уçса пама пулăшакан майсем тăвасси, предприниматель пуçарăвĕсене пулăшасси, пурăнма хăтлă тата хăрушлăхсăр хутлăх йĕркелесси, граждансене социаллă пулăшу парасси.

Асăннă задачăсене татса памалли тĕп условисен шутне инвестици хастарлăхне ӳстерни тата экономикăна аталантарни, бизнеса çакăн пек йĕркепе – кашни бизнес-идейăна ырласа йышăнса тата кирлĕ вăхăтра кирлĕ майпа пулăшу парса – аталантарма майсем туса пани кĕрет.

Предприниматель тата инвестици ĕç-хĕлне пулăшу памалли тата аталантармалли инфратытăмăн халь ĕçлекен организацийĕсен ĕç-хĕлне йĕркелесе тăма пĕлтĕр Чăваш Республикин Инвестици аталанăвĕн агентствине туса хунă.

Çĕнетнĕ Инвестици порталне хута янă ĕнтĕ, вăл «пĕр чӳрече» йĕркепе ĕçленĕ май кашни пулас инвестора пĕр тан майсемпе тивĕçтерессине гарантилет. Электрон площадкин тĕп тĕллевĕ – бизнес валли пĕр пĕтĕм цифра ĕлки пулса пулăшу ĕçĕсене илмелли йĕркене ансатлатасси тата вĕсене кӳмелли вăхăта кĕскетесси пулса тăрать, çакă инвесторăн вăхăтне кĕскетме тата укçитенкине перекетлеме май парать, пулăшу парас ĕçе уçăмлăрах тăвать. Инвестици порталĕ, ĕç тăвакан влаç органĕсене, муниципалитетсене тата ытти инвестици ĕç-хĕлне хутшăнакансене пĕр вырăнта пухса, инвесторăн цифра майĕпе ĕçлекен пулăшуçи пулса тăма тивĕç. Портал вак тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене патшалăх паракан пулăшăвăн мĕнпур формине тытса тăрать, вĕсемпе харпăр хăй пӳлĕмĕ пулăшнипе усă курма пулать.

Инвестици проекчĕсен тата инвестици стратегине пурнăçлакан команда пахалăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствин инвестици проекчĕсен портфелĕн пахалăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, бизнес ĕçне пуçăнакан предпринимательсемшĕн те, лайăх ĕçлекен бизнессемшĕн те бизнеса пулăшса пымалли майсене анлăлатса пымалла.

Хывнă укçа-тенкĕне хӳтĕлесси тата укçа-тенкĕ хывнăшăн хавхалантарасси çинчен калакан килĕшӳсене тĕпе хурса инвесторсене пулăшу памалли меле ĕçе кĕртме кирлĕ документсен пакетне кĕске вăхăтрах пурнăçа кĕртмелле.

«Бизнес капитанĕсем» проекта хута яни вырăнлă пулассăн туйăнать, вăл, муниципалитетсенчи предпринимательлĕх хастарлăхне, кашни территорири майсемпе рынок малашлăхне шута илсе, тытăмлăн аталантарма палăртать.

Лайăх инвестици лару-тăрăвне йĕркелес, бизнеса административлă майпа пусарнине чакарас тĕлĕшпе тăвакан ĕç – çакă республикăри пĕтĕм ĕçлĕхлĕ хутлăхпа экономикăн тата уйрăммăн илнĕ территорин тытăмлă йывăрлăхĕсене тухăçлăн татса памалли май.

Влаç органĕсенче граждансене йышăнмалли кунпа пĕрешкел предпринимательсене йышăнмалли пĕрлехи куна палăртса хăвармалла тата çак ĕçе йăлана кĕртмелле тесе шутлатăп.

Уйрăм çын инвестицийĕсене, ялан тенĕ пекех, йĕркелӳ ĕçĕ енчен лайăх условисем туса хунă çĕре кăна мар, çаплах инженерипе коммуналлă тата социаллă инфратытăм шанчăклăн ĕçлекен тата усă курма меллĕ вырăнсене

хываççĕ. Пĕлтĕр асăннă сферăна хывнă бюджет инвестицийĕсем 40 процент чухлĕ пысăкланнă. Çитес виçĕ çулта çĕршыв Президенчĕн йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн бюджет кредичĕсене тата ытти çавнашкал мелсене реструктуризациленине пула ирĕкленнĕ бюджет кредичĕсен шучĕпе асăннă çул-йĕре хывакан инвестици укçи-тенки тата ытларах ӳссе пырĕ. Чăваш Республикин Правительствин çав укçа-тенкĕпе халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатма та, уйрăм çын инвестицийĕсене хавхалантарма та питĕ тухăçлăн усă курмалла.

Унсăр пуçне, коммерциллĕ мар экономика секторне аталантарма пулăшас, социаллă тĕллевлĕ коммерциллĕ мар организацисене туса хумалли тата аталантармалли майсене кĕртсе, социаллă сферăра çĕнĕ технологисемпе чи лайăх практикăсене сарас тĕллевпе Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствине коммерциллĕ мар организацисене пулăшу паракан ресурс центрне йĕркелеме хушатăп, вăл коммерциллĕ мар организацисемпе социаллă предпринимательлĕх организацийĕсене пулăшу памалли инфратытăмăн пĕр пайĕ пулса тăмалла.

Хăй тĕллĕн ĕçлекенсен институчĕ çине те тимлĕн пăхмалла. Ăна Чăваш Республикинче вăя кĕртнĕ самантран (2020 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа) тытăнса çакăн пек майпа ĕçлессине 30 пин ытла çын суйласа илнĕ. Хальхи вăхăтра хăй тĕллĕн ĕçлекенсем, пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсем шутланнă май патшалăх çав категорие кĕрекенсем валли палăртнă пулăшăвăн мĕнпур майĕпе усă курма пултараççĕ.

Нумаях пулмасть Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Михаил Владимирович Мишустин хушма хуçалăхсене хăй тĕллĕн ĕçлекенсен институчĕ урлă пулăшу памалли тытăма туса хатĕрлеме хушрĕ. Аса илтеретĕп, килти хушма хуçалăхсене пулăшу памалли унчченхи программа вĕçленнĕ, право уçлăхĕнче те çавăн евĕр хуçалăх субъекчĕ çук. Чăваш Ен Правительстви юлашки икĕ çул хушшинче килти хушма хуçалăхсене мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх валли субсиди уйăрса пулăшнă. Чăваш Ен Ял хуçалăх министерствин килти хушма хуçалăхсене Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн пулăшу памалли тытăмлă мерăсем туса хатĕрлемелле. Пирĕн тĕллев – вĕсене хăйсен бизнесне аталантарма, тавар туса илекенсен регионти тата тĕнчери сыпăкĕсене хутшăнтарма майсем туса парасси, çав майсем вĕсене ăнăçуллă предпринимательсем тата тӳрĕ кăмăллă ĕç паракансем пулса тăма пулăшчăр.

Чăваш Ен агропромышленноç комплексĕн продукцине юлашки çулсенче ют çĕршыври потребительсем ытларах та ытларах килĕштереççĕ. Çакă лайăх сутăнакан таварăн рынокĕсене анлăлатса пымаллине тата чĕр тавар туса илес ĕçе тавар туса илекенсене коопераци мелĕпе явăçтармаллине тепĕр хут çирĕплетсе парать.

Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн çумĕ, Федерацин Атăлçи округĕн кураторĕ Дмитрий Николаевич Чернышенко ырланă «Агроăнтăлу» проект та ку енĕпе çĕнĕ майсем уçать.

Ăна хута яма асăннă проект хальхи вăхăтри импорта улăштарассипе çыхăннă çивĕч ыйтăва татса пама пулăшни те, Президент хушнă пек экологи

тĕлĕшĕнчен таса продукци туса кăлармалли тата импорта пăхăнса тăрассине чакармалли майсем йĕркелени те витĕм кӳни пирки иккĕленместĕп.

Пирĕн тĕллев – ăратлă выльăх-чĕрлĕх, инкубаци çăмартисем, хăмла, çĕр улми тата пахча çимĕç вăрлăхĕсем туса илес ĕçре импорта улăштарас енĕпе пĕр тăхтаса тăмасăр çак çул-йĕрсемпе ĕçлеме тытăнасси пулса тăрать. Çакăн валли ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли наукăпа лаборатори комплексне, геномлă селекци лабораторийĕсене тата эмбрионсене трансплантацилессине кĕртсе, туса хумалла.

Çулталăкра 50 миллион инкубаци çăмарти илме май паракан пысăк технологиллĕ иккĕмĕш йĕркери йăх репродукторне тумалли проекта пурнăçа кĕртмелли ĕçсене пуçласа ямалла. Çакă Чăваш Ен чăх-чĕп фабрикисене мĕн кирлипе тивĕçтерме тата Федерацин Атăлçи округĕнчи мĕнпур предприятисен кирлĕлĕхне 36 процент шайĕнче тивĕçтерме пулăшать.

Хăмла туса илессине аталантарма производствăпа технологи инфратытăмне туса хурас енĕпе малалла ĕçлемелле. Çакă пире Раççейре «симĕс ылтăн» туса илес енĕпе малта пыракан регион статусне çирĕплетме май парать.

Интенсивлă майпа пахча çимĕç тата çĕр улми туса илмелли, вĕсене тараннăн тирпейлемелли специализациленĕ вырăн йĕркелемелле, çавăн пекех республикăри хуçалăхсенче çĕр улми вăрлăхĕн хамăр çĕршыври сорчĕсене тăвас ĕçе хăвăртлатмалла.

Вак тавар туса илекенсен продукцийĕсене вырнаçтарассипе çыхăннă ыйтусене татса пама агромаркет тăвас ĕçе хăвăртлатмалла, вăл потребительпе тӳрремĕн çыхăнса ĕçлеме те, суту-илӳ ĕçне дистанци мелĕпе пурнăçлама та майсем уçать.

Правительствăн идеологине шута илсе эпир республикăра мĕн туса илнине пĕтĕмпех ĕçлесе тирпейлетпĕр, тирпейлекен предприятисен хăватне ӳстерме тата çĕнĕ тавар ушкăнĕсене туса кăларассине йĕркелесе ял хуçалăх продукцине тараннăн тирпейлемелли инвестици проекчĕсене пурнăçлама паракан патшалăх пулăшăвĕн мелне малалла тăсмалла тесе шутлатăп.

Сăмахран, «Агростартап» проекта укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли калăпăша, федераци укçи-тенки çумне республика нухратне хушса, икĕ хут ӳстерме, çавăн пекех кăçал çырла туса илес ĕçе «Малашлăх» грант шайĕнче пулăшу парассине сыхласа хăварма сĕнетĕп. Ял çыннисем пĕр хутчен мар ыйтнине тата республикăра усă курман шыв ресурсĕсем нумай пулнине шута илсе çав программăна аквакультурăна аталантарассине те кĕртмелле тесе шутлатăп.

Ял хуçалăхне пулăшу памалли мерăсене пурнăçланă май, пирĕн çакна лайăх ăнланмалла, отрасле аталантарса эпир ялти пурнăç пахалăхне ӳстермелли тата яла аталантармалли тĕп майсен никĕсне хыватпăр.

Çав хушăрах халăх пурнăçĕн йăли-йĕркине тивĕçлипе упракан, çынсем хăйсен чĕлхине тата авалтан килекен йăласене типтерлĕн сыхласа пурăнакан вырăн шăпах ял шутланать, çавăнпа та эпир тепĕр пĕлтерĕшлĕ çул-йĕре – туризма аталантармалли майсем йĕркелетпĕр.

Паллах ĕнтĕ, туризм пирĕн республикăна илĕртӳллĕрех тăвас, ăна брендсемпе сăнарлас тата тараватлăх индустрийĕпе потребитель рынокне хушма инвестицисем явăçтарас енĕпе пĕлтерĕшлĕ çул-йĕр пулса тăрать. Çавна май

пĕлтĕр эпир Чăваш Енĕн Туризма аталантармалли агентствине туса хутăмăр. Ун умне регионти цифра платформине – туризм порталĕ текенскере – туса хурас енĕпе пысăк тĕллев лартнă.

Чăваш Республикинче туризма аталантармалли патшалăх программине тата концепцине туса хатĕрлесе çирĕплетнĕ. Анлă стратеги шайĕнче туса хатĕрлесе çитернĕ «Регионсем хушшинчи «Руна çулĕ» бренд маршрутне тăвасси» проекта 2030 çулччен пурнăçлас енĕпе «Туризм. РФ» корпораципе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пусса çирĕплетнĕ. Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствин кăçал Чăваш Енре туризм площадкисене е «Руна çулĕн» центрĕсене палăртмалли ĕçсене туса ирттермелле, вĕсем туристсене пулăшу памалли вырăнсем пулса тăрĕç. Çапла вара 2024 çулччен Чăваш Республикин территорийĕнче туризм площадкисен инфратытăмне йĕркелесе çитермелле, вĕсем наци хăйне евĕрлĕхĕпе наци пĕрлĕхне лайăх кăтартса пама, руна контентне ăса хывма пулăшĕç.

Туристсен юхăмне ӳстерме ятарлă площадкăра тăтăшах паллă пулăмсем йĕркелесе ирттерни пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Енре регионсем хушшинчи куравпа конгресс комплексне йĕркелемелле. Куравсемпе ярмăркăсем рынокăн палăрмаллах хăвăрт аталанакан пайĕ пулса тăнине шута илсе, Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствине çак проекта хута ярассипе çыхăннă йĕркелӳпе техника тĕлĕшĕнчи пĕтĕм ыйтăва интересленекен ведомствăсемпе пĕрле пăхса тухма хушатăп.

Хисеплĕ ĕçтешсем! Паян республикăра ача-пăча, культурăпа пĕлӳ, халăх, ял, санаторипе курорт, юхан шыв тата çӳрев туризмĕн программисем ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Промышленноç туризмĕ çине тимлĕрех пăхма ыйтатăп. 2021 çулта республикăри промышленноçăн тăхăр предприятийĕнче виçĕ пине яхăн çын валли экскурсисем туса ирттернĕ, вĕсенчен 50 процентĕ – шкулта вĕренекенсем , техникумсемпе аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсем. Сăмах май, республикăри промышленноç туризмĕн ĕçне Стратегилле пуçарусен агентстви пысăка хурса хакланă, проекта «Промышленноç туризмĕ енĕпе турсем проектласси» акселератора кĕртнĕ. Кăçал проект ĕçне республикăри ытти предприятисене те хутшăнтарма, халăхăн тĕрлĕ ушкăнĕсем валли туризм маршручĕсен программисене туса хатĕрлеме хушатăп.

Унпа пĕрлех çĕнĕрен тăвакан производство площадкисем промышленноç туризмĕн объекчĕсем пулса тăма пултараççĕ тата пулса тăма тивĕç те. Вĕсем чи малтан Çĕнĕ Шупашкар хулинчи ятарлă экономика зонин резиденчĕсен предприятийĕсем. Кунта, сăмахран, биопластиксем тата полилактид чĕлхемĕсем туса кăлармалли Раççейри пĕрремĕш завод тума палăртнă, хăнăхнă йăлапа сиенлĕ производствăсен шутне кĕртекен «Химпром» çитес 5–6 ултă çул хушшинче хупă производствăллă симĕс предприяти пулса тăмалла. Халĕ предприяти харпăрлăхçисемпе пĕрле унăн аталану стратегине туса хатĕрлес енĕпе ĕçлетпĕр.

Çирĕплетнĕ килĕшӳсемпе шайлашуллăн 2022–2025 çулсенче ятарлă экономика зонинчи тĕпленсе ĕçлекен резидентсем хывакан инвестицисен

пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 15 миллиард ытла тенкĕпе танлашать, пĕр пин ытла ҫĕнĕ ĕҫ вырăнĕ йĕркеленмелле. Ҫакна палăртса хăвармалла, сăмах кунта паянхи куна ҫирĕплетнĕ килĕшӳсем пирки пырать. Зонăна туса хурсанах ҫĕнĕ резидентсем хутшăнасси куҫ кĕрет.

Кирлĕ документсен пакечĕ Раҫҫей Федерацийĕн Правительствинче те ĕнтĕ. Пирĕн тĕллев – чăрмавсенчен асăрханасси тата кирлĕ йышăнăва ҫывăх вăхăтрах кĕтсе илесси.

Ҫĕнĕ кластерсем тăвас тĕлĕшпе малалла ĕҫлемелле. Пĕлтĕр туса хунă кластеризаци центрĕ асăннă ĕҫе тапратса яма пултарчĕ.

2021 ҫулта пирĕн патра пысăк технологиллĕ оборудовани туса кăларакансен «АБАТ» ҫĕнĕ кластерĕ хута кайрĕ, ăна федерацин промышленноҫ кластерĕсен реестрне кĕртнĕ. Ҫитес ҫулсенче ҫĕнĕ тата пысăк малашлăхлă ҫакăн пек кластерсем йĕркеленмелле: пӳлĕмсене комплекслăн пуянлатмалли изделисем туса кăларакансен кластерĕ, алăк тăвакансен кластерĕ, ҫавăн пекех машиностроени тата хими сферинчи кластерсем.

Республика Правительствин, уйрăмах Чăваш Ен Промышленноҫ министерствин хамăрăн предприятисене йĕркеленсе ҫитнĕ коопераци сыпăкĕсене хутшăнтарас енĕпе те, ҫавăн пекех наукăра тата инноваци ĕҫĕнче ҫĕнĕ япаласем туса хатĕрлес тĕлĕшпе те ҫĕршыври малта пыракан корпорацисемпе (Ростех, РЖД, Роскосмос, Россети) тачă ҫыхăнса ĕҫлемелле.

Шупашкар тата Канаш хулисенчи виҫĕ индустри паркĕ ҫумне ҫывăх ҫулсенчех бизнеса тытса пыма хатĕрлесе ҫитернĕ тата темиҫе площадка хушăнмалла. Ҫав шутра ҫӳлерех асăннă Ҫĕнĕ Шупашкарти ятарлă экономика зони, Патăрьел районĕнчи индустри паркĕ тата Ҫĕнĕ Шупашкар хулинчи индустри паркĕ, уйрăм бизнес республика пулăшнипе тата патшалăхпа уйрăм ҫынсен ĕҫтешлĕхĕн йĕркине тĕпе хурса тăвакан темиҫе промышленноҫ площадки. Чăваш Ен Промышленноҫ министерствин Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствипе пĕрле пĕрлехи управляющи компани туса хурас ĕҫе кăҫалах пуҫăнмалла.

Чăваш Ен кăткăс конкурс условийĕсенче 2.0 ятарлă инвестици контрактне пурнăҫласси ҫинчен калакан килĕшĕве тунă Раҫҫейри пĕрремĕш регион шутланать. Республика территорийĕнче импорта улăштармалли шайра пĕчĕк тата вăтам хăватлă трактор техникине туса кăлармалли проекта ĕҫе кĕртме палăртнă. Ҫавна май Шупашкарти трактор заводĕнче ҫĕнĕ производство линийĕ йĕркеленет кăна мар, вăл машиностроени сферинчи тĕрлĕ енлĕ компетенцисен центрĕ пулса тăрать.

Республикăн ESG-технологисене хастарлăн алла илме лайăх майсем пур, чăн малтанах кунта хĕвел батарейисем туса кăлармалли производствăна тата хĕвел энергетикипе усă курмалли технологисене асăнмалла. Раҫҫейри хĕвел модулĕсене туса кăларакан чи пысăк предприятипе – «Хĕвел» тулли мар яваплă обществăпа пĕрле республикăра ҫавнашкал электростанцине тумалли проекта кăҫалах пурнăҫа кĕртни вырăнлă пулать тесе шутлатăп. Чăваш Ен Промышленноҫ министерствине Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствипе пĕрле ҫак ĕҫе йĕркелесе яма ыйтатăп.

Кӑмрӑк йӳҫек газӗ «сывлӑш-шыв» системӑра улшӑннине тӗпчемелли пилот проектне Шупашкар ГЭСӗн шыв управӗн 200 пин гектар ытла йышӑнакан акваторийӗнче тата ҫыран хӗрринчи пайӗнче карбон полигонӗ туса хурса хутшӑнмаллине те асра тытса тӑмалла. Анлӑ стратегин республикӑна аталантармалли ултӑ проекчӗ шутӗнче эпир «Атӑл – экологи енӗпе мала иртмелли регион» проекта тӑратрӑмӑр. Пуласлӑхра ҫакӑ пире хамӑрӑн вӑйлӑрах енсемпе туллин усӑ курма тата верификациленӗ углерод единицисене сутма май парать. Чи кирли те пӗлтерӗшли вара экологие тата Шупашкар шыв управӗн шыв пахалӑхне лайӑхлатни шутланать.

Раҫҫей Президенчӗ хушнипе ҫӗршыва инфратытӑмпа «ҫӗлесе» ҫыхӑнтарас енӗпе анлӑ ӗҫ пырать. Сӑмахран, Чӑваш Ен урлӑ М-12 трасса иртет. Асӑннӑ масштаблӑ проекта пирӗн патӑмӑрта чукун ҫул, автомобильпе шыв транспорчӗн инфратытӑмӗ вӑйлӑ аталаннине тата Канаш хули ҫывӑхӗнче тӗп трассӑн Казахстан ҫул юппине тума палӑртнине шута илсе пурнӑҫлани маларах та пӗр хутчен кӑна мар хускатнӑ автомобиль тата чукун ҫул транспорчӗсене пӗрлештерекен хаб логистикине тӑвас ыйтӑва ҫӗклет. Чӑваш Ен Экономика аталанӑвӗн министерствин Инвестици аталанӑвӗн агентствипе пӗрле ҫак ҫул-йӗре пурнӑҫлассине тӗплӗн тишкерсе вӑраха ямасӑр тивӗҫтермелле.

Ҫын пурӑнакан хӑтлӑ та хӑрушлӑхсӑр тата экологи тӗлӗшӗнчен таса хутлӑх этем хӑйшӗн пурӑнмалли вырӑна суйласа илнӗ чухне шута илекен тӗп критери, республика Правительствипе вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемшӗн вара – пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлемелли тӗп ориентир пулса тӑрать.

Стратегилле пуҫарусен Агентствин версийӗ тӑрӑх, республикӑн старт позицийӗсем самаях шанчӑклӑ. Чӑваш Ен Раҫҫей регионӗсенчи пурнӑҫ пахалӑхӗн рейтингӗн лидерӗсем шутланакан Мускав, Тюмень облаҫӗ, Санкт-Петербург пек пысӑк агломерацисемпе тата лайӑх кӑтарту тунӑ ытти регионсемпе пӗрле пӗрремӗш теҫеткене кӗчӗ.

Паллах ӗнтӗ, пирӗн ҫынсен пурнӑҫ пахалӑхне ӳстерес тӗллевпе татса памалли ыйтусем нумай-ха. Халӑха хумхантаракан ҫивӗч ыйтусем хушшинче – пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх сферинче паракан пулӑшу ӗҫӗсен пахалӑхӗ, шывпа тивӗҫтересси, обществӑлла транспорт ӗҫӗ, хытӑ сийлӗ ҫулсен пахалӑхӗ, ҫулсемпе тротуарсене юртан тасатасси, ҫӳп-ҫапа вӑхӑтра тата йӗркеллӗн турттарса тухманни тата ыт.те. Влаҫ органӗсен тӗллевӗ – халӑхпа ҫыхӑнса ӗҫлемелли майсемпе шута илнӗ ҫивӗч ыйтусем ҫине васкавлӑн тимлӗх уйӑрасси. Ҫакна Чӑваш Республикинчи Регион управленийӗн центрӗ хастарлӑн пурнӑҫлать, асӑннӑ ӗҫе тивӗҫлипе туса пырса вӑл Раҫҫей Федерацийӗнче рейтингри лайӑх вырӑнсене йышӑнать. Пирӗн ҫавнашкал пулӑшу ӗҫӗсене, ҫав шутра халӑхпа ҫыхӑнса ӗҫлемелли халь ӗҫлекен порталпа тата «Инцидент-менеджментпа» усӑ курса, малалла аталантармалла, ҫынсене хӑйсен шухӑшӗсене пӗлтерме тата анлӑн сӳтсе явмалли ыйтусене татса парас ӗҫе хутшӑнма пулӑшакан майсем туса памалла.

Пурӑнмалли ҫурт-йӗр строительстви, экономика аталанӑвӗн драйверӗсенчен пӗри пулса, пурнӑҫ условийӗсене хальхи стандартсем тӑрӑх йӗркелес енӗпе пӗлтерӗшлӗ ӗҫ-хӗл пурнӑҫлать. Пӗлтӗр республика пурӑнмалли ҫурт-йӗр хута ямалли плана юлашки ҫулсенче пуҫласа пурнӑҫларӗ, строительство калӑпӑшне унччченехи ҫулпа танлаштарсан 24 процент чухлӗ ӳстерчӗ. Пирӗн халӗ асӑннӑ кӑтартусене сыхласа хӑвармалла кӑна мар, вӗсене малашне ҫирӗппӗн ӳстерсе пырассине тивӗҫтермелле.

Пӗлтӗр ҫурт-йӗре комплекслӑ майпа лартмалли площадкӑсенче инфратытӑм объекчӗсене маларах туса хурассине тивӗҫтерме бюджет укҫи-тенкине 625 миллион тенкӗ ытла уйӑрнӑ, 150 пин тӑваткал метр пурӑнмалли ҫурт-йӗр тума кирлӗ условисем йӗркеленӗ.

Ҫитес ҫулсенче асӑннӑ тӗллевсене пурнӑҫлама каякан тӑкаксене палӑрмаллах ӳстерме палӑртнӑ. Пӗлтӗр Раҫҫей Правительстви инфратытӑм тума паракан бюджет кредитне 3,7 миллиард ытла тенкӗ  шайӗнче уйӑрса парассине ырланӑ. Ҫак укҫа-тенкӗне 800 пин тӑваткал метр пурӑнмалли ҫурт-йӗре комплекслӑ майпа лартма палӑртакан пилӗк площадкӑра инфратытӑм объекчӗсене маларах туса хумалли ӗҫе тивӗҫтерме яма палӑртнӑ.

Ҫавӑн пекех республикӑн хула тӑвас ӗҫӗн вӑй-хӑватне, пурӑнмалли ҫурт-йӗр тума уйӑрса панӑ ҫӗр лаптӑкӗсене тухӑҫлӑн алла илесси тата харпӑр хӑй лартакан ҫурт-йӗр объекчӗсене туллин шута илесси ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхса, ҫӗнӗлле палӑртмалла тесе шутлатӑп. Ҫакна тума Чӑваш Ен Строительство министерствипе Чӑваш Ен Экономика аталанӑвӗн министертвине вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе пӗрле асӑннӑ объектсен инвентаризацине тивӗҫлӗ шайра туса ирттерме хушатӑп.

2021 ҫулта 4,5 пин ҫын, е 1400 ҫемье, хӑйӗн пурӑнмалли условийӗсене лайӑхлатрӗ, вӗсен чӗрӗк пайӗ пӗлтӗр йышӑннӑ ҫӗнӗ пулӑшу майӗсемпе усӑ курчӗ. Ку вӑл ипотека тӑрӑх тӳлемелли малтанхи тӳлеве татма пӗр хутчен уйӑракан укҫа-тенкӗ тата тӑлӑх ачасене, ҫула ҫитмен сакӑр е ытларах ачаллӑ ҫемьесене паракан пурӑнмалли ҫурт-йӗр сертификачӗ. Асӑннӑ майсен вӑйӗпе усӑ курассине май килнӗ таран анлӑлатма сӗнетӗп, мӗншӗн тесен иртнӗ ҫулхи практика ҫав майсем пурӑнмалли ҫурт-йӗр юрӑхлӑхне тивӗҫтерес енӗпе те, хӑйсене килӗшекен варианта суйласа илес тӗлӗшпе те ҫынсемшӗн меллӗ пулнине кӑтартса пачӗ.

Эпир кивелсе юрӑхсӑра тухнӑ тата авариллӗ пурӑнмалли ҫурт-йӗртен ҫынсене урӑх вырӑна пурӑнма куҫармалли хальхи программӑна срокчен вӗҫлеме тӗллев лартрӑмӑр. Тӗслӗхрен, пӗтӗмӗшле лаптӑкӗ сакӑр пин тӑваткал метрпа танлашакан авариллӗ 24 нумай хваттерлӗ ҫуртри 219 пӳлӗмре пурӑнакан 530 ҫынна урӑх вырӑна куҫарма йышӑннӑ. Ҫакӑ пире Президентӑн 2020 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 1-мӗшӗ тӗлне авариллӗ тесе йышӑннӑ ҫурт-йӗр тӗлӗшпе ҫирӗплетнӗ ҫавӑн пек ятлӑ программине 2023 ҫултах кӗме май парать. Кунта вара калаҫу 300 ҫурт, 4 пин ҫын, 80 пин тӑваткал метр пурӑнмалли ҫурт-йӗр ҫинчен пырать. Анчах та ҫӗнӗ программӑна кӗрес тесен, халӗ вӑйра тӑракан программӑна вӗҫлемелле.

Пӗлтӗр Раҫҫей Президенчӗн йышӑнӑвӗсемпе харпӑрлӑхри черетлӗ 528 ҫурта газ кӗртнӗ. Ҫавнашкал тата 1873 ҫурт – ҫитес ҫулхи ӗҫсен планӗнче. Ку

цифрăсем юлашкисем пулманнине шанса тăратăп. Вĕсем, паллах, тата та пысăкланаççĕ. Эпир ку енĕпе ĕçлеме хатĕр. Асăннă кăтартусене «Газпром» ПАОпа килĕштерсе ĕçленине пула тума май килчĕ. Çакă пире чылай хушă сӳтсе явакан черетлĕ ыйтăва татса парассине – Шупашкар хулин Атăл леш енчи территорине газ илсе çитерессине – кăçал вĕçлеме пулăшассине те шанатăп. Ку чăннипех пĕлтерĕшлĕ пулăм, çакна пĕр иккĕленмесĕрех калатăп, вăл унта инвестицин пысăк проекчĕсене пурнăçлассине тапратса ярĕ. Анчах та асăннă территорине аталантармалли принципсемпе стандартсене халех, вăл Шупашкар агломерацийĕн пайĕ пулнине шута илсе, палăртса хăвармалла. Республикăн тĕп хули йĕри-тавра вырнаçнă территорин (кунта 75 процент чухлĕ производство хăвачĕсем, наукăпа инноваци вăй-хăвачĕ чăмăртаннă, республикăри халăхăн 65 проценчĕ пурăнать) малалла ӳсме те майĕсем пур. Çав хушăрах уйрăм отрасльсене аталантарассипе çыхăннă ыйтусене татса парас ĕçре вăл тĕп вăй пулмалла тата республикăн пĕтĕм территорийĕнче пурăнакан çынсене кирлĕ сервиспа тивĕçтермелли компетенцисен центрĕ те пулса тăма тивĕç.

Эпир «ДОМ.РФ» корпораципе пĕрле Шупашкар агломерацийĕн мастер-планне туса хатĕрлес ĕçе пуçăнтăмăр. Çакă пире территорин хула тăвас ĕçе аталантармалли стандарчĕсене çирĕплетме, транспорт, инженери, коммуналлă инфратытăмĕсемпе тивĕçтерессипе çыхăннă йышăнусене пурнăçлама май парать. Чăваш Ен Строительство министерствине çак ĕçе хутшăнтарнă муниципаллă пĕрлĕхсен администрацийĕсемпе пĕрле палăртнă плансене пурнăçлама ыйтатăп.

Республикăри халăх пурăнакан мĕнпур вырăна тирпей-илем кĕртни тата кивелсе çитнĕ коммуналлă инфратытăм (вăл мĕнлерех шайра пулни пирĕн çынсен пурнăç пахалăхĕпе тӳрремĕн çыхăннă) системисене çĕнетес енĕпе пуçарса янă ĕç те кирлисен шутĕнчех.

Çав тытăмсем кивелсе çитнĕ шая 80 процентпа хакланă тĕслĕхсем те пур. Сăмах, чăн малтанах, шывпа тивĕçтермелли тата шыва юхтарса кăлармалли, ăшăпа тивĕçтермелли объектсем, электричество сечĕсем тата лифт хуçалăхĕ çинчен пырать.

Иртнĕ çул Патăрьел, Шăмăршă районĕсен, Комсомольски районĕн кăнтăр пайĕн нумай пăрăхлă шыв çулне туса пĕтерес ĕçе тепĕр хут пуçларăмăр. Çакна Раççей Федерацийĕн Президенчĕ пулăшнипе тума май килчĕ. Объект вĕçленменнине, строительство ĕçне вара 2014 çултах пуçланнине шута илсе кăçалах ревизи ĕçне тата хута яма хатĕрлекен оборудование вырнаçтарса лартассипе çыхăннă чылай ĕçе кăçалах тума тивĕ.

Çĕмĕрле хулине шывпа тивĕçтермелли çĕнĕ схемăна проектлас ĕçе М-12 трасса тăвассипе çыхăннă ĕçсемпе пĕр харăс туса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăп.

Эпир пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕсене Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшакан фонд укçитенки шучĕпе çĕнетмелли федераци программи ĕçлесе каясса кĕтетпĕр, ăна укça-тенкĕпе Наци пуянлăхĕн фондĕнчен тивĕçтерме палăртнă. Чăваш Ен Çĕ-

мĕрле тата Куславкка хулисенче ăшă сечĕсем тума 1,2 миллиард тенкĕ илме заявка панă та ĕнтĕ.

2021 çулта «Хулан хăтлă хутлăхне йĕркелесси» федераци проекчĕ шайĕнче тата республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе 230 яхăн обществăлла вырăна тата картишсен территорийĕсене тирпей-илем кĕртнĕ. Кăçал та кăтарту çавăн чухлех пулĕ.

Пĕлтĕр эпир картиш территорийĕсене тата обществăлла вырăнсене тирпей-илем кĕртмелли пĕрлехи стандартсене çирĕплетрĕмĕр. Стандартсем картишсене хăтлăх элеменчĕсемпе палăртнă шайра тивĕçтерессине, çавăн пекех нумай хваттерлĕ çуртсен ушкăнĕсем валли усă куракансен хăрушсăрлăхне тивĕçтерекен тата палăртнă стандартсемпе килĕшсе тăракан нумай функциллĕ комплекссем тăвассине шута илеççĕ.

Кăçал ӳсĕме тата интерессене шута илсе зонăсем çине пайланă 50-ран кая мар нумай функциллĕ ача-пăча вăййă комплексĕсене вырнаçтарма палăртса хунă. Çак тĕллеве пурнăçлама республика бюджетĕнчен 500 миллион тенкĕ уйăратпăр. Лифт хуçалăхĕн ĕçĕ-хĕлĕ те пысăк тимлĕх ыйтать, вăл кивелнин кăтартăвĕ республикăра 70 процентран та иртнĕ. Ĕçлеттермелли срокĕ тухнă 1883 лифта çĕнетмелле. Чăваш Ен Строительство министерствин лифтсен ытларах пайне 2023 çултах çĕнетессине шута илсе малашнехи ĕçсен планне туса хатĕрлемелле.

Республикăра вырăнти пуçарусем çинче никĕсленнĕ обществăлла инфратытăма аталантармалли проектсем ăнăçлă пурнăçланаççĕ. Кусем пуçаруллă проект текенскерсем. 2021 çулта хуласенче 40 пуçаруллă проекта пурнăçланă, ялсемпе саласенче вара – çулсем тумалли, коммуналлă тата социаллă инфратытăма туса хумалли тата çĕнетмелли 916 проекта. Кăçал валли 862 проект суйласа илнĕ. Ялта пурăнакансем те, ял поселенийĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсем те час-часах ыйтнине шута илсе, 15,3 пин ытла çын пурăнакан муниципаллă районсен проекчĕсен пĕтĕмĕшле чи пысăк хакне (халĕ вăл 10 миллион тенкĕ шайĕнче) 14 миллион тенкĕ таран ӳстерме май пур тесе шутлатăп.

Чăваш Республики экологи рейтингĕнче яланхи пекех малти вунă регион шутĕнче тăрать. Çак хăтлă пурăнма тата регионăн инвестици илĕртӳлĕхĕ валли лайăх майсем йĕркелекен, пире мăн асаттемĕрсенчен куçнă хаклăх питех те пĕлтерĕшлĕ, хисеплĕ ĕçтешсем. Пирĕн тĕллев, хамăрăн çак вăйлă енпе инвестици ĕçĕ-хĕлĕнче те, регионa аталантарас ĕçре те тухăçлă усă курса, хальхи лайăх шайри кăтартусемпе сăнлавсене çитес ăрусемшĕн упраса хăварасси пулса тăрать.

Иртнĕ çул «Экологи» наци проекчĕн шайĕнче Шупашкар хулин тасатакан сооруженийĕсене çĕнетрĕмĕр тата Сĕнтĕрвăрри районĕнче тасатакан сооруженисен строительствине проектласа хутăмăр, вăрмансене çĕнетмелли ĕçсен планне икĕ хут ытла тултарса пурнăçларăмăр тата хăйсен территорийĕн вăрманлăхне 32 процента çити ӳстернĕ çĕршыври 13 регион шутне кĕтĕмĕр.

Пирĕн вăй хумалли тĕпĕр çул-йĕр вăл – коммуналлă хытă каяшсене тыткалас ĕçе кирлĕ пек йĕркелесси, ирĕк памасăр пулса кайнă çӳп-çап выранĕсене тата сиенлĕ объектсене пĕтересси. Пĕлтĕр эпир Канаш хулинчи çӳп-çап вырăнне пĕтермелли тĕллеве яваплăха хамăр çине илнипе çеç вăхăтра пурнăçлама пултартăмăр. Малашне кун пек йĕркепе ĕçлемелле мар. Чăваш Ен Çут çанталăк министерствин надзор ĕçне çирĕпрех туса пымалла тата кирлĕ чухне ытларах пуçарулăх кăтартмалла. Тĕслĕхрен, кăçал Етĕрне хулинчи полигонра ĕçсем пуçланаççĕ, черетре – тата ытти полигонсем.

Асăннă çул-йĕр енĕпе тумалли хатĕр ĕç планне коммуналлă хытă каяшсене тыткаламалли территори схемине кĕртекен улшăнусене обществăпа анлă сӳтсе явнин пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх туса хатĕрлемелле. Ĕçсем «Раççейри экологи операторĕ» уçă право компанийĕ хутшăннипе пулса пыраççĕ. Чăваш Ен Çут çанталăк министерствине муниципаллă пĕрлĕхсен администрацийĕсемпе пĕрле çавнашкал улшăнусене сӳтсе явассипе тата хатĕр ĕç планне çирĕплетессипе çыхăннă мĕнпур ĕçе I квартал хушшинче туса ирттерме сĕнетĕп.

Президентăн углерод витĕмне чакарассипе çыхăннă хушăвĕсене пурнăçланă шайра Атăл акваторийĕпе мĕнлерех усă курмалли майсем пирки эпĕ маларах асăнса хăвартăм.

Çул-йĕр тата транспорт инфратытăмĕн тăрăмĕ çӳлерех палăртнă çул-йĕрсемпе пĕрлех халăх пурнăçĕн пахалăхĕшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ. Федераци шайĕнче маларах калаçса татăлни пире «Хăрушлăхсăр лайăх пахалăхлă çулсем» наци проекчĕ шайĕнче 1 миллиард тенке яхăн хушма укçа-тенкĕ илме шанăç парать. Çавна май Чăваш Ен Транспорт министерствин маларах калаçса татăлнă ĕçсене пурнăçлассине вĕçне çитермелле тата асăннă проект шайĕнче çулсен нормăпа палăртнă кăтартăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе Чăваш Республики хальлĕхе юлса пынине пĕтермелле.

Кăçал тĕп хулари Граждански урама юсаса çĕнетес ĕçсене вĕçлемелле, Лапсар тăкăрлăкĕнчи ĕçсене тума пуçламалла. Паян эпир Шупашкар хулинчи транспортăн виççĕмĕш çурма ункине тума пĕтĕмпех хатĕрленсе çитрĕмĕр теме пултаратпăр.

Чăваш Ен Транспорт министерствине ку ыйтăва тĕрĕслесе тăма тата кирлĕ пулсан çав тĕллеве пурнăçланă çĕре пире пурсăмăра та хутшăнтарма сĕнетĕп. Çавăн пекех муниципаллă пĕрлĕхсем хушшинчи автоçулсен хытă сийлĕ çулсăр сыпăкĕсене пĕтерес ыйту та татăлман-ха. Кăçал Сĕнтĕрвăррипе Куславкка районĕсем хушшинчи çавнашкал сыпăка пĕтерме палăртнă, каярах ыттисемпе ĕçлеме тытăнăпăр.

Çул çинчи хăрушсăрлăх ыйтăвĕ те çивĕччисен шутĕнче тăрать. «Чăваш Республикин çӳреве йĕркелекен тата хăрушсăрлăхпа тивĕçтерекен центрĕ» хысна учрежденийĕ туса хунă. Анчах та çул çӳрев хăрушсăрлăхне тивĕçтермелли тытăмлă ĕçре, тĕрĕссипе каласан, кал-кал аталану палăрсах каймасть-ха. Транспорт министерствине асăннă сферăри пĕтĕм ĕçе кĕске вăхăтра йĕркелесе çитерме тата пурнăçлама тытăнма ыйтатăп.

Обществăлла транспорт ĕçне тата пассажирсем турттарассине çĕнĕрен туллин хускатса ямалла, хисеплĕ ĕçтешсем. Çав тĕллевпе транспорт тытăмĕн аталанăвне планлас ĕçе пуçланă, çакă асăннă сферăна реформăлассин никĕсĕ пулса тăмалла. Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн уйрăм программин кураторĕн Денис Валентинович Мантуровăн харкам пуçарăвне тата Правительство Председателĕ Михаил Владимирович Мишустин пулăшнине пула пĕлтĕр эпир 68 çĕнĕ троллейбус тата шыв айĕнчи çунатлă «Валдай-45Р» виçĕ карап илме пултартăмăр.

Чăваш Ен Транспорт министерствин кăçал Атăл тăрăх пассажирсене регионсем хушшинче турттарма пуçлассине тивĕçтермелле. Çавăн пекех республикăра пассажирсене турттармалли стратегине туса хатĕрлес ĕçе вĕçлесе ăна хастарлăн пурнăçлама тытăнмалла.

Унсăр пуçне, 2021 çулта Раççей Федерацийĕн Правительстви пирĕн республикăна электротранспорт инфратытăмне аталантарас енĕпе ĕçлекен 16 пилот регион шутне кĕртрĕ, çакă пире çитес пилĕк çул хушшинче электричество вăйĕпе ĕçлекен транспорт хатĕрĕсен шутне самаях ӳстерме май парать. Чăваш Ен Промышленноç министерствине республика территорийĕнчи зарядламалли инфратытăмăн малашлăх аталанăвĕн схемине туса хатĕрлеме хушатăп. Хула çыннисене йĕркеллĕн турттарассине тивĕçтермелли ĕçе вăй подстанцийĕсене çĕнетсе пынипе шайлашуллăн туса пымалла.

Республикăра саккуна пăхăнмасăр вăрттăн ĕçлекен таксисем чылай пулни хытах шухăшлаттарать. Экспертсем палăртнă тăрăх, кун пеккисем – такси рынокĕнче 80 процент. Çавнашкал таксистсем саккуна право, налук тата моральпе этика тĕлĕшĕнчен пăснипе пĕрлех, тĕп хăрушлăх кăларса тăратаççĕ, ку вăл – пассажирсене турттармалли хăрушсăрлăх йĕркисене пăсни.

Кăçал Чăваш Енĕн сывлăш хапхи – Андриян Григорьевич Николаев ячĕллĕ тĕнчери аэропорт пĕтĕмпех çĕнелсе улшăнасса кĕтетпĕр. Эпир рейссен шучĕ тата маршручĕ хутшăнса пынине асăрхатпăр, эппин, пассажирсен юхăмĕ те ӳсет. Кунта вĕçевсене тивĕçтермелли техника тĕлĕшĕнчи ыйтусене управляющи компанипе тата Росавиаципе пĕрле тишкерсе тухни пĕлтерĕшлĕ.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Кирек мĕнле ĕç-хĕле те ертсе пымалла. Çакна пур пек майсемпе туллин усă курса, теветкеллĕхе чакарса, хăрушлăха пĕтерсе тата малашлăха курса ертсе пымалла. Юлашки икĕ çул хушшинче ĕç тăвакан влаç органĕсем хăйсен ĕçĕ çине пачах урăхла пăхма пуçларĕç, хальхилле каласан, улшăну çулĕпе утса тухрĕç. Чăн малтанах граждан служащийĕсене пĕтĕм ĕç юхăмне хутшăнтарассине тивĕçтермелли ĕçсене туса ирттернĕ тата ирттереççĕ те.

Атом энергийĕн «Росатом» патшалăх корпорацийĕпе пĕрле «Тухăçлă регион» проект шайĕнче иртнĕ çул эпир республика тата муниципаллă влаç органĕсен ĕç тухăçлăхне ӳстерес енĕпе ĕçлеме пуçларăмăр. Сăмах кунта патшалăх тытса пырас ĕçĕн хаклăхĕсен çĕнĕ тытăмне тата корпоративлă çĕнĕ культурине йĕркелесси çинчен пырать. Çакă пурте эпир сирĕнпе тăвакан ĕçĕн

тĕп заказчикĕсем – Чăваш Республикинче пурăнакансем – ыйтнисене тата кĕтнисене тивĕçтерме кирлĕ.

Унсăр пуçне, мĕнпур ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕç-хĕлне сервис майĕпе тивĕçтерекен функцисене централизацилемелли çул-йĕре палăртнă. Ку вăл бухучетпа туяну ĕçĕсем, хуçалăх тата транспорт тивĕçтерĕвĕ, информаци технологийĕсем, кадрсемпе тивĕçтересси тата кадрсен вăй-хăватне аталантарасси, коррупцие хирĕç кĕрешесси. Çакăн пек туни кĕске вăхăтрах компетенцисен центрĕсене туса хурассине, сервис шайне ӳстерессине тата пĕр условнăй единица пуçне лекекен тăкаксене чакарассине тивĕçтерчĕ, ĕç вăхăчĕн 527 пине яхăн сехетне (ăна ытти ĕçсене пурнăçланă чух усă курма пултаратпăр) чакарма пулăшрĕ, чи кирли – патшалăх пулăшăвĕ памалли вăхăта чылай кĕскететпĕр.

Тĕслĕхрен, хăш-пĕр административлă процедурăсене кăларса пăрахнине, ĕçе автоматланине, пурăнакан вырăна тата пропискӑна пăхмасăр йышăнассине хута янине пула Чăваш Ен Ĕçлев министерстви кӳрекен социаллă пулăшу ĕçĕсене НФЦ офисĕсенче илмелли вăхăт 48 сехетрен 2 сехет таран кĕскелчĕ.

2022 çулхи задача – ĕç тăвакан влаç органĕсен кадрсен резервне çĕршыври тата тĕнчери малта пыракан стандартсемпе килĕшӳллĕн йĕркелесе тата асăрхаса тăрас процедурăна вĕçлесси. Ку ĕçе эпир Раççейри Халăх хуçалăхĕн тата патшалăх службин академийĕпе пĕрле пурнăçлатпăр.

Иртнĕ çул республикăра икĕ муниципаллă округ йĕркеленчĕ. Пĕр шайлă муниципаллă пĕрлĕхĕн, ним иккĕленмелли те çук, лайăх енĕсем япăххисенчен ытларах. Çынсемшĕн ĕçе пахалăхлă тата хăвăрт туни пĕлтерĕшлĕ. Шайсем мĕн чухлĕ ытларах, яваплăхĕ те çавăн чухлĕ уçăмсăртарах. Маларах тунă пĕтĕмлетӳсем ĕçсене ертсе пырасси лайăхланнине те, муниципаллă служащисен ĕç укçи шайĕ пысăкланнине те кăтартаççĕ. Хальхи вăхăтра ытти муниципаллă районсем те çакăн пек çул-йĕре суйласа илчĕç. Тата федераци саккунĕсем те çавăн майлах аталанса пыраççĕ.

Тĕп суйлав комиссине тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацине çак çăмăл мар ĕçре муниципалитетсенчи ĕçтешсене туллин пулăшса пыма ыйтатăп.

Цифровизаци тата цифра трансформацийĕ – ахаль сăмахсем кăна мар. Хăш-пĕр ĕçсене электронлă формата куçарни кăна та мар. Ку вăл чи малтанах ертсе пырас ĕç, корпоративлă культура, тулашри хутшăнусем тĕлĕшĕнчи тĕп улшăнусем. Цифра трансформацийĕ патшалăха тытса пырассин шайĕпе Чăваш Республикин экономика вăй-хăватне ӳстерес, региона хушма инвестицисем явăçтарас, пысăк тухăçлă ĕç вырăнĕсем туса хурас, социаллă сферăна аталантарас енĕпе пысăк витĕм кӳрет.

Иртнĕ çул эпир сирĕнпе Цифра трансформацийĕн стратегине тата Программине хатĕрлес тата хӳтĕлес енĕпе калама çук пысăк ĕç туса ирттертĕмĕр. Çавна май Чăваш Ен тăратнă проектсен шучĕпе (17 отрасльти 128 проект) Раççейри регионсенчен пĕрремĕш виçĕ регион шутне кĕме пултарчĕ. Халĕ вĕсене хастарлăн пурнăçа кĕртмелле.

Чăн малтанах НФЦ ĕç-хĕлне централизацилемелле. Çакă патшалăх тата муниципаллă пулăшу ĕçĕсене илме кирлĕ документсен хисепне чакарать çеç мар, социаллă пулăшăва экстерритори принципĕпе, урăхла каласан хăш вырăнта регистрациленине пăхмасăр, паракан мелпе илессине тивĕçтерет. ТелеНФЦ сервис усă куракансемшĕн меллĕ пулнине кăтартрĕ кăна мар, тĕнчери IT конкурс эксперчĕсене те тыткăнларĕ. Ку проект бизнеса пулăшса пырас тата аталантарас тытăма НФЦ офисĕсен анлă сетьне хутшăнтарма, çавна май цифра мелĕпе те, предприниматель хăй специалистпа тĕл пулса калаçни урлă та пулăшу пама май парать. Кăçал çак сервиса туллин пурнăçлама, çав шутра аякран çыхăнса пулăшу парассине тата предпринимательсене онлайн-консультаци парассине кĕртсе, çавăн пекех ТелеНФЦ формата граждансене право енĕпе онлайн-пулăшу пама (ку пире республикăри тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илмелли вăхăта чакарма пулăшĕ) усă курма тĕллев лартатăп.

Отрасльсен проекчĕсене те хута ямалла. Тĕслĕхрен, ял хуçалăхĕнче «Цифрăллă ял хуçалăхĕ» наци платформине кĕрессине, ăратлă выльăх-чĕрлĕхĕн централизациленĕ цифра платформине туса хурассине, фермер апатне кирлĕ çĕре çитерсе паракан «Хамăрăнни. Тăванни» цифра платформине ĕçе кĕртессине тивĕçтермелле, транспорт отраслĕнче – 2024 çул тĕлне интеллектуаллă транспорт тытăмне хута ямалла, энергетикăра – трансформаци тĕллевлĕ «Комплекслă цифрăллă энергорайон» проекта пилот йĕркипе хута ямалла, унăн тĕллевĕ – энергетика ресурсĕсене çитерсе парас тата усă курас ĕçе лайăхлатасси, пурнăç хăрушсăрлăхĕн сферинче – «Хăрушлăхсăр хула» аппаратпа программа комплексĕн регионти пайне общество хăрушсăрлăхне, право йĕркине тата пурăнмалли хутлăха комплекслăн тивĕçтермелли темиçе шайлă тытăм евĕр туса хумалла.

Тĕрĕслевпе надзор ĕç-хĕлĕн цифра трансформацийĕ уйрăм çул-йĕр шутланать. 2021 çулта Чăваш Республикин çак ĕçе пурнăçлакан мĕнпур влаç органĕ çĕнĕ цифра платформи çине куçрĕ. Ку платформа уçăмлă, ăнланмалла пулнипе тата предпринимательсем валли палăртнă çирĕп йĕркепе пурнăçламалли требованисене уçăмлăн сăлтавланипе палăрса тăрать, эппин, бизнес тĕрĕслевпе надзор ĕç-хĕлне кирлĕ пек йышăнассине тивĕçтерет.

Çак ĕçе пурнăçлакан Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем умне тĕрĕслев мероприятийĕсем туса ирттерессинчен йĕркене пăснисене асăрхаттарасси çине куçма тĕллев лартатăп. Айăпласси тĕп вырăнта пулмалла мар. Кун пек майпа ĕçлени тухăçлăрах пулать, бизнеса административлă майпа пусарнине чакарма тата бизнеса ертсе пыма тан майсем йĕркелеме пулăшать.

Йышăнусем тума хатĕрленнĕ тата вĕсене çирĕплетнĕ чухне информаци тата экспертпа тишкерӳ тĕлĕшĕнчен тухăçлă технологи пулăшăвĕпе тивĕçтерес, патшалăх, регион тата муниципалитет управленийĕн органĕсем пĕрпĕринпе хутшăнса ĕçлессин шайне ӳстерес тĕллевпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Лару-тăру центрне туса хумалла тесе шутлатăп.

Чăваш Енĕн халăх пурăнакан пĕтĕм вырăнне пысăк хăвăртлăхлă интернетпа тивĕçтерни пирĕн ĕçĕн тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ çул-йĕрĕ шутланать,

çакăн пек кăна кашни çынна çӳлерех асăннă ырлăхпа тивĕçтерме пултаратпăр. Кун пирки пĕлтĕр те калаçнă, ыйтăва 2024 çулта татса пама тĕллев лартатăп.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Аталаннă экономикăпа хăтлă пурнăç хутлăхĕнче те çынсене тата çемьесене пулăшу парасси патшалăхăн пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ пулса юлать.

Чăваш Республикин бюджет çинчен калакан вăйра тăракан саккунĕнче граждансене паракан социаллă тӳлевсемпе пособисене прогноз кăтартăвĕсемпе килĕшӳллĕн 4 процент чухлĕ индексацилессине палăртса хăварнă. Анчах та пĕлтĕр чăн инфляци чылай пысăкрах пулса тухрĕ. Асăннă тӳлевсене инфляцин чăн шайне тĕпе хурса нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 8,8 процент чухлĕ индексацилеме сĕнетĕп – Чăваш Республикинче иртнĕ тапхăрта йĕркеленнĕ потребитель хакĕсен индексне шута илсе.

Иртнĕ çултан пуçласа мĕнпур социаллă тӳлеве социаллă казначейство принципĕпе тӳлемелли меле пурнăçа кĕртме пуçларăмăр. Президент патшалăх пулăшăвĕн тивĕçлĕ мерисем çинчен калакан информацие гражданесене харпăр хăй даннăйĕсен никĕсĕ çинче пĕлтерсе тăма тĕллев лартать. Чăваш Ен Ĕçлев министерствине Чăваш Ен Цифра министерствипе пĕрле çав тĕллеве пурнăçламалли «çул карттине» тăратма ыйтатăп.

Çемьепе мăшăрлану институчĕ – общество çирĕплĕхне, аваллăхран тăсăлакан йăласемпе пурнăç йĕркине, культурăпа чĕлхемĕре типтерлĕн сыхласа упрассине тивĕçтерекен паха пуянлăх. Çавăнпа та пирĕн умра çак института популяризацилес, çемьесене пур енлĕ пулăшу парас задача тăрать.

Пĕлтĕр эпир пĕр вăхăтрах сакăр е ытларах ачаллă çемьесен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатрăмăр, нумай ачаллă çемьесене 150 лаша вăйĕ таран двигатель хăвачĕллĕ çăмăл автомашинăшăн транспорт налукне тӳлессинчен хăтартăмăр, кăçалхи вĕренӳ çулĕнчен пуçласа сахал тупăшлă нумай ачаллă çемьесенче ӳсекен 11 пин ытла ачана шкулта тӳлевсĕр вĕри апат çитерес ыйтăва татса патăмăр. Тата ытти йышăнусем те турăмăр. Çак ĕçе çĕршыв Президенчĕн çынсене пурнăçри йывăр лару-тăруран хăтăлма пулăшакан тулли тытăм туса хума хистекен хушăвĕсемпе килĕшӳллĕн малалла туса пымалла тесе шутлатăп.

Çавăн пекех çемье институтне популяризацилеме тата ăна пулăшса пыма социаллă пурнăçпа реабилитаци центрĕсен никĕсĕ çинче «Манăн çемье центрĕ» консультаципе методика центрĕсем уçăлни пулăшĕ. Кăçал çавăн пек икĕ центр Çĕмĕрле тата Шупашкар хулисенче уçăлмалла.

Çемье темипе обществăлла юхăм та ĕçлени савăнтарать. Çапла, обществăлла икĕ организаци – Чăваш Енри Хĕр арăмсен союзĕ тата Чăваш Енри Ашшĕсен союзĕ «Яланлăхах пĕрле пулни – çемье пурнăçĕн тĕп тĕллевĕ» проект пурнăçа кĕрсе пырать. Ăна уйрăлусенчен вăхăтра асăрхаттарас тата çемьесене çирĕплетес, явапла ашшĕ-амăшлăхне йĕркелес, амăшлăхпа ашшĕлĕх хаклăхĕсене тавăрас тĕллевпе пуçарса янă. Усси – куç умĕнче! 2021 çулта мăшăрсемпе тĕл пулса калаçнă хыççăн вĕсенчен 33 проценчĕ çемьесене

сыхласа хӑварнӑ. Ҫавнашкал обществӑлла пуҫарусене малалла та пулӑшса пымалла тесе шутлатӑп.

Унсӑр пуҫне, патшалӑхӑн тата обществӑн пӗлтерӗшлӗ задачисен шутне аслӑ ӑрӑва хастарлӑ вӑрӑм ӗмӗрлӗ пулма условисем туса парасси, сывлӑхне лайӑх шайра тытса тӑрассипе упраса хӑварасси, ӑна общество тата волонтерлӑх ӗҫ-хӗлне хутшӑнтарасси кӗрет. Ҫак тӗллевпе социаллӑ тивӗҫтерӳ центрӗсен никӗсӗ ҫинче «Манӑн социаллӑ центр» проект пурнӑҫланать. Иртнӗ ҫул ҫакӑн пек пилӗк модель центрӗ Улатӑр, Куславкка, Шупашкар, Ҫӗмӗрле тата Ҫӗнӗ Шупашкар хулисенче уҫӑлнӑ. Вӗсенче физкультура, художествӑлла пултарулӑх занятийӗсем ирттереҫҫӗ, компьютер тата финанс пӗлӳлӗхне ӳстереҫҫӗ. Ҫулталӑк хушшинче тата тепӗр виҫӗ районта – Канаш, Шупашкар тата Етӗрне районӗсенче ҫак проекта пурнӑҫа кӗртме палӑртнӑ.

Тӗп ҫул-йӗрсен шутӗнче – инвалидсене, инвалид ача пур ҫемьесене патшалӑх пулӑшӑвӗ парасси, вӗсене пурӑнма лайӑх хутлӑх тата тан майсем туса парасси. Республикӑри районсемпе хуласенчи реабилитаци пулӑшӑвне илекен ачасен хисепне ӳстерес тӗллевпе Сывлӑх тӗлӗшӗнчен хавшак ачасемпе ҫула ҫитмен ҫамрӑксен реабилитаци центрне ҫӗнетме палӑртнӑ. Ҫавӑн пекех 2022 ҫулта пирӗн умра социаллӑ ыйтусене тивӗҫтерекен сферӑра ял ҫӗрӗнче пурӑнакан ҫамрӑк инвалидсене социаллӑ заказ мелӗпе патшалӑх пулӑшӑвне киле пырса парас енӗпе пилот проектне ӗҫлеттерме тытӑнмалли тӗллев тӑрать.

Ҫынсене ытларах чухне ӗҫ шыранӑ, квалификацие улӑштарнӑ тата ӗҫе вырнаҫнӑ вӑхӑтра пулӑшу кирлӗ. Пирӗн ӗҫпе тивӗҫтерекен центрсем ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ е ытти сӑлтавсене пула ӗҫ шыракан ҫынсене пулӑшу парас тесе чылай ӗҫ тӑваҫҫӗ. Тӗслӗхрен, социаллӑ контрактсем ӑнӑҫлӑ пурнӑҫа кӗреҫҫӗ.

Федераци шайӗнче халӑха ӗҫпе тивӗҫтерекен центрсене комплекслӑ майпа ҫӗнетмелли пилот проектне кӗме конкурс пӗлтернине шута илсе Чӑваш Республикин унта хутшӑнмалла тесе шутлатӑп. Ҫакӑ вӗсене ӗҫ паракансене те, ӗҫ шыракансене те 24 тата 7 форматпа кӳрекен пулӑшу ӗҫӗсен пахалӑхӗн хальхи требованийӗсене тивӗҫтерекен, пӗрлехи брендпа ӗҫлекен кадр центрӗсем евӗр улӑштарса ҫӗнетме май парӗ. Ҫапла майпа ҫынсем валли хальхи вӑхӑтри меллӗ сервис, центрта ӗҫлекенсем валли хӑтлӑ условисем йӗркеленӗҫ.

Халӑха сыхласа хӑвармалли, унӑн сывлӑхне ҫирӗплетмелли, пирӗн ҫынсен хастарлӑ вӑрӑм ӗмӗрлӗхӗ валли условисем туса памалли витӗмлӗ мерӑсен пӗлтерӗшӗ те пысӑк.

Хисеплӗ ӗҫтешсем!

Унччен паллӑ пулман йывӑрлӑхпа – ҫӗнӗ коронавирус инфекцийӗпе тӗл пулнӑранпа икӗ ҫул ҫитрӗ ӗнтӗ. Пандеми пире самаях лӑскарӗ. Лару-тӑру халӗ те ҫивӗчех-ха. Ҫакна эпир паянхи мероприятие ирттерме хатӗрленнӗ чухне те лайӑх туйса илтӗмӗр. «Пиллӗкмӗш хум» вӑй илсе пырать. Паллах, эпир пурнӑҫри ҫак йывӑр тапхӑра чӑтса ирттерӗпӗр, ку мура та ҫӗнтеретпӗрех. Анчах та мӗн хакпа? Пирӗн врачсем кашни пациент пурнӑҫӗшӗн кӗрешеҫҫӗ, ӳпкисем 100 проценчӗпех сиенленнӗ чирлӗ ҫынсем сывалнӑ тӗслӗхсем те пур, анчах та тӗлӗнтермӗш тени яланах пулмасть.

Эпир врачсене пӗтӗм чунтан тав тӑватпӑр, вӗсен пандемипе кӗрешес ӗҫри паттӑрлӑхӗпе ҫирӗплӗхӗнчен тӗлӗнсе тӑратпӑр. Вӗсем талӑкӗпех ура ҫинче пулма тата кирлӗ медицина пулӑшӑвӗ пама вӑй тупаҫҫӗ.

Ҫапах та паян, ман шутпа, чи витӗмлӗ тав сӑмахӗ вӑл – вакцинаци пункчӗсене килни. Хӑйӗн тухӑҫлӑхне ҫирӗплетсе панӑ хӳтлӗх мелӗ пур, вӑл – вакцина. Шел пулин те, тӗрлӗ шухӑшлава пула хӑйсене тата ҫывӑх ҫыннисене хӳтӗлемелли ҫав шанчӑклӑ меле пурте суйласа илмеҫҫӗ-ха. Вӗсенчен чылайӑшӗ кайран, больница койки ҫине лексен, уншӑн пӑшӑрханаҫҫӗ. Ман пата ҫӗр ытла ҫавӑн пек ҫырупа хыпар ҫитрӗ ӗнтӗ. Халӗ те вакцина тутарманнисене чӗнсе калатӑп, ҫак ӗҫе вӑраха ан тӑсӑр. Кам тахҫанах вакцинаци тунӑ – ревакцинаци тӑвӑр.

Юлашки икӗ ҫул хушшинче коронавирус инфекцийӗ сарӑлассине сирсе ярас енӗпе эпир сирӗнпе пысӑк ӗҫ туса ирттертӗмӗр, ҫӗнӗ условисенче пурӑнма тата ӗҫлеме вӗрентӗмӗр. Эпир пӗрле пулнипе тата патшалӑх Пуҫлӑхӗн Владимир Владимирович Путинӑн ҫынсене тата бизнеса пулӑшу памалли йышлӑ йышӑнӑвне пула ҫӗнтертӗмӗр. Чӑваш Республикинче пурӑнакансене чӑтӑмлӑхшӑн тата ӑнланнӑшӑн тав туса хӑварас тетӗп.

Пӗтӗм медицина ӗҫченне тепӗр хут тав сӑмахӗ калатӑп. Сирӗн ӗҫӗре нимӗнле сӑмахпа хаклама та май ҫук, эсир хӑвӑра шеллемесӗр ӗҫленине пула пиншер ҫын пурнӑҫне ҫӑлса хӑварнӑ.

Ҫак йывӑр тапхӑрта волонтер юхӑмӗ шанчӑклӑ та вӑйлӑ ӗҫтеш пулса тӑчӗ. Нумай тӗрлӗ професси, сфера ҫыннисем ҫак кирлӗ ӗҫ-хӗле хутшӑнчӗҫ. Пурне те тавтапуҫ!

2020 ҫултах чирлесе ирттернӗ чирӗн йывӑрлӑхне шута илсе эпир чирлесе ирттернисене реабилитаци тумалли программӑна хута ятӑмӑр. Пӗлтӗр ҫакӑн пек программӑна федераци центрӗ ӗҫе кӗртрӗ. Пухнӑ опыта тата анлӑланса пыракан майсене шута илсе Чӑваш Ен Сывлӑх министерствине чирлесе ирттернисен ытларах пайне реабилитацилемелли, ҫавӑн пекех ял ҫӗрӗнче пурӑнакансене те реабилитаци ирттерессипе тивӗҫтермелли майсем тупма ыйтатӑп.

Пандеми условийӗсенче те эпир сывлӑха сыхлас ӗҫе аталантармалли плана пурнӑҫласа пытӑмӑр тата ӑна малалла тӑсатпӑр. Ҫапла, 2021 ҫулта 53 ҫӗнӗ фельдшерпа акушер пункчӗ тунӑ, ҫав шутра аякри саласемпе ялсенче те, сывлӑх сыхлавӗн 14 объектне комплекслӑ майпа юсанӑ, Шӑнкӑртан салинче врач амбулаторине ӗҫе кӗртнӗ, тата ултӑ врач амбулаторийӗ тума пуҫланӑ. Ҫавӑн пекех ача-пӑча поликлиникисене ҫӗнетмелли федераци программине туллин пурнӑҫланӑ.

Кӑҫал та ку программа калӑпӑшӗпе пӗчӗкех пулмӗ – 52 больница ҫуртне тата вӗсен ял ҫӗренчи тытӑмлӑ пайӗсене юсама палӑртнӑ, Канаш районӗнче нумай профильлӗ пысӑк поликлиника тума пуҫлатпӑр.

Чӑваш Ен Сывлӑх министерствине Раҫҫей Президенчӗ ырланӑ, республикӑшӑн стратегиллӗ шутланакан объектсене: Республикӑри клиника больницин ҫӗнӗ больница комплексӗпе инфекци корпусне, ҫавӑн пекех Республикӑри клиника онкодиспансерӗн ҫӗнӗ корпусне тӑвассипе ҫыхӑннӑ ӗҫсен хӑвӑртлӑхне унчченхи шайрах тытса пыма ыйтатӑп.

Республикăра пурăнакансене пахалăхлă медицина пулăшăвĕпе тивĕçтермелли инфратытăма аталантарнисĕр пуçне халăха упраса хăварас тĕллевпе çын сывлăхĕпе çыхăнман тулашри сăлтавсенчен килекен вилеслĕхпе кĕрешмелли çирĕп мерăсем çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Тĕслĕхрен, путса вилекенсен шучĕ виççĕмĕш пай чухлĕ ӳснĕ. Пушарсен шучĕ чакнă пулин те, юлашки икĕ çул хушшинче ушкăнлă пушарсен шучĕ ӳснине палăртнă, вĕсенче иккĕрен пуçласа ултă çын таран вилет. Мĕнпур сăлтавран çуррине яхăн тĕслĕхре пушар çулăмпа асăрханмасăр усă курнинчен тухни сисчӳлентерет. Пĕлтĕрхи ака уйăхĕнче Канаш районĕнче хăрушă ĕç пулса иртрĕ – хĕр арăм, хăйĕн хуçалăхĕ çумĕнчи лаптăкра çӳп-çапа чĕртсе çунтарнă чухне асăрханаймасăр, вут-çулăма кĕрсе ӳксе вилнĕ.

Физкультурăпа спорт – сывлăха çирĕплетмелли пĕлтерĕшлĕ мел.

Физкультурăпа спорта тăтăш хутшăнакан граждансен шучĕпе (ку вăл кашни иккĕмĕш çын) Чăваш Ен Раççейĕпе 22 тата Федерацин Атăлçи округĕнче пиллĕкмĕш вырăн йышăнать. Халăха спорт сооруженийĕсемпе тивĕçтернин шайĕпе (80 процента яхăн) Раççейри вăтам кăтартуран эпир 21 процент иртнĕ.

Спортпа тата вăй-хал хастарлăхĕпе кăсăклантарма мĕн пĕчĕкрен тытăнмалла. Пирĕн «Шкулти самбо», «Шкулти шахмат», «Шкулти футбол» тата ытти проектсем ĕçлеççĕ, вĕсене пула кашни шкул ачи юрăхлă тата массăллă спорт тĕсĕсене хутшăнма пултарать. Çак ĕçре 2023–2025 çулсенче районсемпе хуласенчи футбол уйĕсене пĕрлехи стандарт шайне çитермелли тата 2030 çулччен пурнăçлама палăртнă «Хальхи шкул стадионĕ» республика программисем самаях пысăк пулăшу кӳрĕç. Чăваш Ен Спорт министерствине çак çул-йĕр енĕпе тытăмлăн ĕçлеме сĕнетĕп.

Республикăра спорт инфратытăмне «Спорт – пурнăç йĕрки» федераци проекчĕ тата республикăн адреслă инвестици программи шайĕнче çĕнетес тата тăвас ĕç пырать. Çак тĕллевсене пурнăçлама эпир юлашки икĕ çул хушшинче пĕр миллиард та виç çĕр миллион тенкĕ уйăртăмăр.

Паллах, эпир пĕлтĕр пуçланă Шупашкар хулинчи «Атăл» стандиона юсаса çĕнетес ĕçсене çулталăк стройки тесе калама та пулать. Ку ыйтăва вунă çул хушши татса парайман, анчах та федераци шайĕнче пире хастар пулăшнине пула эпир çак проекта хускатса ятăмăр. Шупашкар хулинче, Çĕрпӳ тата Патăрьел районĕсенче сывлăха çирĕплетмелли усă йышши тăватă физкультура комплексĕ, ГТО комплексĕн нормативĕсене йышăнмалли çичĕ площадка тунă.

Кăçал харăсах темиçе пысăк объект туса пĕтерессе кĕтетпĕр. Ку вăл Çĕнĕ Шупашкар хулинчи Олимп резервĕсен 3-мĕш спорт шкулĕн спорт комплексне юсаса çĕнетесси, Шупашкар районĕнчи Ишлей салинче 25-метрлă ишмелли бассейнлă сывлăха çирĕплетмелли физкультура комплексне тăвасси. Кăçалах «Атăл» стадионта тата Шупашкар хулин «Çĕнĕ хула» микрорайонĕнче тӳрех икĕ витнĕ каток тума пуçлатпăр.

Пирĕн 2023 çулхи плансенче – Олимп резервĕсен 9-мĕш спорт шкулĕн авариллĕ çурчĕ вырăнĕнче витнĕ тăраллă 50-метрлă ишмелли бассейн тата биатлон центрĕ валли йĕлтĕрпе роллер трассине тума тытăнасси.

Иртнĕ çул эпир Токио хулинче иртнĕ Олимп вăййисен кĕмĕл призерĕсем пулса тăнă Анжелика Сидоровăпа Елена Иванова çĕнтерĕвĕсемшĕн савăнтăмăр. 2021 çулхи пĕтĕмлетӳсем тăрăх, Раççейĕн допинга хирĕç кĕрешекен «РУСАДА» агентствин рейтингĕнче допинга хирĕç кĕрешессипе пĕрремĕш вырăна тухрăмăр. Ку енĕпе питех те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 2019 çулта ку еннĕпе лару-тăру мĕнлерех йывăр пулнине эсир астăватăр ĕнтĕ. 2019 çулхипе танлаштарсан, спортăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе Раççей Федерацийĕн пĕрлештернĕ спорт командисен йышне кĕнĕ республика представителĕсен шутне чĕрĕк пай чухлĕ ӳстертĕмĕр. Ку вăл 227 спортсмен. Çирĕплетнĕ йышăнусем вара Чăваш Республикин спортсменĕсем иккĕлле зачетсем парассине май килнĕ таран чакарма пулăшрĕç.

Çак тренда çирĕплетсе хăварас тĕллевпе Олимп, Паралимп тата Сурдлимп вăййисене хутшăнакансене паракан премисем пекех тĕнчери спорт ăмăртăвĕсенче пысăк спорт çитĕнĕвĕсем тунăшăн Чăваш Республикин спортсменĕсене тата вĕсен тренерĕсене паракан преми виçине ӳстерме сĕнетĕп.

Çакă республикăн сумлă та паллă спортсменĕсен çĕнĕ ăрăвне йĕркелессине шанатăп. Халĕ эпир чапа тухнă олимпиецсемпе – паллă ентешсемпе мĕнле мухтанатпăр, вăхăт иртнĕçемĕн вĕсемпе те çавăн пекех мăнаçланăпăр. Вĕсем – Ардалион Игнатьев, Валериан Соколов, Владимир Воронков, Валерий Ярды, Валентина Егорова, Елена Николаева тата ыттисем те. Çав паллă ентешĕмĕрсем пире савăк кăмăл-туйăм тата чаплă çĕнтерӳсем, хамăр республикăпа тата çĕршывпа мухтанма хистекен чылай самант парнеленĕ.

Вĕсен тĕслĕхĕ çине таянса, кашни çынна хăйĕн çемйин, тăван кĕтесĕн, Чăваш Республикин тата пирĕн Тăван çĕршывăн – Раççей Федерацийĕн пуласлăхĕшĕн пултаруллăн ĕçлеме чĕнсе калатăп!

«Вырăс патшалăхĕ çине шанса пурăнăр, ăна юратăр, вара вăл сирĕн аннĕр пулĕ», – çакăн пек халал панă пире 100 çул каялла хăйĕн Чăваш халăхне панă халалĕнче пирĕн патриархăмăр Иван Яковлевич Яковлев.

Нумай нациллĕ тата нумай тĕнлĕ пысăк çемье йышĕнче – Раççей патшалăхĕнче – эпир пилĕк çĕр çула яхăн ĕнтĕ, пĕтĕм çĕршывăмăрпа пĕрле ăна аталантарас, çирĕплетес ĕçе кашни хамăр тӳпене хыватпăр. Пĕрлех йывăрлăхсене те, хальхи вăхăтра вăйлă палăракан пусарăва та тивĕçлипе çĕнтерсе пыма пултарăпăр.

Эпĕ çӳлерех калани çакна тепĕр хут çирĕплетсе парать: йăлтах тума пулать. Туслăн та килĕштерсе ĕçлесен, хамăрăн вăйсăр тата вăйлă енсене лайăх пĕлсе тăрсан. Тĕплĕн тишкерсе тунă план пур пулсан, чи кирли – палăртнă тĕллевсене пурнăçлама пĕтĕм вăя пĕрлештермелле.

Хисеплĕ ĕçтешсем! Хаклă туссем!
Итленĕшĕн тав!